№1111.
31-195



ИВАН МУЂИ

# ХӖРЛӖ КУЛӐШ

ЂАВАШИСТАТ 1931

ЙӐВАН МУҪИ

# ХӖРЛӖ КУЛӐШ

(КАЛАВСЕМ)

ҪӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИСТАТТӖЛСТВИ
ШУПАШКАР—1931

Послано в набор 26-V-1931 г.
Подписано к печати 16-IX—31
Редактор Л. АГАКОВ.

Отпеч. в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Уп. Чувашлита № 1354 Заказ № 765 Тираж 5100 экз.

## Сойăна йуратса çыратăп.

— Сойă, Сойă! Ђĕрем çăвĕ!. Шăккалатлă канфеткă!.. Тутлăран та тутлă пĕремĕк!.. Сĕтпе пыл çăлкуçĕ!

Етемсем анђах мар, выђăхсем те сан çине, Сойă, ăшă куçпа пăхаççĕ,—сана курсан хӳрисене тăратса тăрсттин-тăрсттин сиксе хавасланса илеççĕ.

Сойăђкă! Сойĕнккă! Тĕрĕссипе каласан, Сойă! Сойă, Сойă!

Ђунăм хавалĕ хăпарса кайнипе, санăн йатна пысăк саспаллисемпех пуçласа çырнă (астăвайманнипе).

Пĕђĕккипе çырмаллађђĕ, мĕншĕн тесен Сойă йатлă хĕрарăм çинђен марха, урăх сойă çинђен пыраѓ манăн ку калаври халапăм. Еп калас сойă—пăрçа майлăскер, çимелли йапала, çĕр пиђĕ çинђе ӳссе пулаѓ. Етемсем те хаваслансах çийеççĕ ăна, выђăхсем те тĕкĕшсех кавлеççĕ сойă утине, сойă çилосне, сойă вăрри ђустине.

*
* *

Васли муђи Мускава мĕн ĕçпе пынине каламăпăр. Пынах пĕрре вăл Мускава.

Ђăнкăр-ђăнкăр трамвайсем, ĕнелле мĕкĕрекен

автомопилсемпе автопуссем, хуђёсене (етташсене) шутланă ђухне пуç çинђи картуса çĕре ÿкерекен çуртсем, макаçăнсем, кĕтÿ пек урамри халăх Ваçли муђин ђĕрине кăрт-кăрт таптарса, пĕтĕм тăнпуçне çавăрса йани çинђен калаca паха вăхăта иртерсе тăмăпăр. Ун çинђен вăл хăй те каласа парĕ (ыйтсассăн). Урăх йышши тĕлĕнтерекен йапала курнă Ваçли муђи Мускавра.

Калас пулат, Ваçли муђи Мускавра пĕрремĕш хапрăк-кухђă столовăйĕнђе хисеплĕ хăнасем ваљђи тунă веђђĕрта пулнă.

Хисеплĕ хăнасем камсем пулни, паллах, улпутсем мар ĕнтĕ, хуçасем те мар, ĕççыннисен претставиттĕлĕсем.

Пысăк пÿлĕм. Пысăк пÿлĕмре пысăк сĕтелсем. Умĕсене шур саппунсем çакнă илемлĕ майрасем тĕрлĕрен çимеллисем вĕçи-хĕрисĕр пырса лартаççĕ сĕтеллисем çине.

Ваçли муђи хăй умне лартнă çимеллисем çине çуллăн пăхса сухалĕсене шăлкаласа çеç ларат.

Малтан токлат итлерĕç. Кашни халапрах токлат калаканни сойăна асăнат. Сойă, тет, сойă, тет. Çапла-çапла, тет. Пĕлесшĕн те сойă çинђен мĕн каланине Ваçли муђи, анђах вырăсла ђухлайманни касат. Револђутси ĕçĕнђе паллă пулнă пĕрпĕр Сойă йатлă хĕрарăм çинђен калат ĕнтĕ ку, тесе тавçăрса илет йулашкинђен Ваçли муђин пуçĕ.

Токлат хыççăн, сойă йатне асăнса, пурте алă çупса кăшкăрса тăђĕç ђылайђђен. „Страствуй, Сойă! — теççĕ.

Ку пулђĕха.

Çутă стаккансемпе илсе пырса, кашни çын умне коффĕ лартса пађĕç (офитсианккăсем).

— Ку коффĕне сойăран тунă,—тесе вырăсла тăнлантарса хăвараççĕ хăнасене.

Тĕлĕнет Васли муҫи хăй те, пуçĕ те.

— Мĕнле Сойăши ку?

Хăнасем ĕçеççĕ, çиеççĕ, сойă сăмаха çăвартан та кăлармаççĕ.

Умне лартса панă тирĕкрен пĕр пĕремĕке илсе çăвара хыпаŏ Васли муҫи те. Пĕремĕкĕ хыпнă-хыпман ирĕлсе кайаŏ çăварта.

Пит тутлă мĕн.

— Сойă вкуснă?—тесе ыйтрĕ çумра ларакан пĕр рапоҫҫи Васли муҫирен.

— Ку çамрăк çынăн йуратнă хĕрĕ Сойă йатлă пулмалла. Мĕн манран ыйтмалла пулнăха хăй йуратни çинҫен... Мăшкăласшăн мари ку манран,— тесе шухăшласа илҫĕ Васли муҫи.

Нимĕн те ҫĕнмерĕ хирĕç. Çыхланнинҫен çыхланманни терĕ пулмалла.

Шăккалат, канфет... илсе çийет. Ай-йай, тутлă! Каллех... Ŏфу! Мĕнле пурте Сойăпа аташса кайнăха. Сойă-шăккалат, тесе лараççĕ намăса пĕлменскерсем.

Унтан пеҫҫени çийет Васли муҫи. Пеҫҫенийĕ тутлă, сахăр пекех. Кăна та, хăйаматла-и тен, „Сойă пеҫҫени“ теççĕ тĕлĕнтермĕшсем. Ăçтан. Сойăран пеҫҫени пулма пултараŏ?!

— Е-е!—терĕ шĕвĕр пӳрнине çӳлелле çĕклесе Васли муҫи.—Е-е! Кусене пĕçерекен хĕрарăмĕ Сойă йатлă пулнă мĕн! Пĕçерме пултараŏ мур! Курасҫĕ хăйне. Мĕнлескерши?

Коффӗпе пӗрле сӗт лартса панӑ. Лӗпӗрт сыпать Васли муҫи. Ӗлӗк выҫлӑх вӑхӑтӗнҫе Америкӑрен кӳнӗ сӗт тутийех калать.

Селӗм!

Ҫӑтаймарӗ Васли муҫи,—ыйтрӗ хӑй ҫумӗнҫе лараканнинҫен:

— Ҫйа молоко? Коровӑ штоҫ?

— Нет, не коровӑ. Сойӑн молоко!—терӗ лешӗ хирӗҫ ним кулмасӑр-тумасӑрах.

Еккей! хӗрарӑм сӗтне ҫиме лартса панӑ. Хм!..

Хӗрарӑм сӗҫӗ шӑвак тетҫӗҫ. Тутлӑ-иҫ ара ку. Ҭфу! тем те ҫийӗн...

Мӗнле пӗр хӗрарӑмӑнах ҫавӑн ҫухлӗ сӗт пулма пултарнӑха?! Ҫилли унӑн ӗне ҫилли пекех пулӗ,—тесе йӗрӗнсе ларать Васли муҫи.

Мӑйӑр пекки пӗҫерсе тунӑ. Хм!.. Тӗлӗнмелле! Кӑна та Сойӑ мӑйри теҫҫӗ. Ӑҫтанха мӑйӑр пулма пултарать Сойӑн?!

—Тутлӑ пулин те, ҫийес марха кӑна,—терӗ Васли муҫи йӗрӗнсе. Ҫиме лартса панӑ ытти ҫимӗҫсене тутанмасӑрах тӑрса тухрӗ вара вӑл паха сӗтел хушшинҫен. Тӑранмасӑрах тӑранҫӗ.

Ытти хӑнисен Васли муҫи пек тиркес шухӑш ҫук. Ҫийеҫҫӗ пурне те. Кашнине ҫимесренех „Сойӑ тутлӑ“ тесе лараҫҫӗ витленӗ пек (вырӑсла, конешнӑ).

Ҫей ӗҫсе тӑраннӑ хыҫҫӑн, вӑйӑсем пуҫланса карӗҫ. Тем тӗрлӗ вӑйӑ. Йурӑ, ташӑ. Ҫамрӑксемшӗн савӑнӑҫ!

Пӗр майра пур. Ҫамрӑкскер! Вӑй питтискер пулмалла. Пиҫӗ-куҫӗ... ҫырла шывӗпе ҫунӑ пек.

— Сойӑ марши ку?—тет Васли муҫи.

Веҫҫӗр пӗтес умӗн хисеплӗ хӑнасене каҫхи

апат çиме ларма хушрĕç. Ваçли муђи те кĕрсе ларђĕ.

Çимелли вĕçи-хĕрисĕр. Малтан сӳтĕн (стутĕн) çиме пырса лартрĕç. Тиркĕсем ђаплă.

Вилккăсемпе çийеççĕ.

Çынсене кура Ваçли муђи те çиме тытăнђĕ сӳтĕне. Ай-йай, тутлă пĕçернĕ, шелмă!

— Мĕнле выђăх пуç-уринђен тунăши кăна?— Хăй шухăшĕ çинђен ыйтасшăн та, анђах вырăсла пĕлменни канçĕрлет. Çапах пĕтĕм хăйуллăхне пухса, ыйтрĕ-ыйтрех пĕр ватăрах хăнинђен:

— Ђево еттă?—терĕ.

Лешĕ: стутĕн, терĕ.

— Снам сӳтĕн. Сӳтĕнне как стелăлă? Мессă штођ?

Аптрамалла – хытмалла! Сӳтĕне те сойăранах тунă, тет.

Мĕнле? Сойă пуç-уринђен тунă сӳтĕне çитерес çукха кунта. Сойă йатлă куххарккă пĕçернĕ ĕнтĕ кăна...

Çапла шухăшласа ларнă вăхăтра, тĕрлĕрен имçамсемпе тунă вĕри йашка пырса ларнă Ваçли муђи умне. Кашăк илсе çиме тытăнаť. „Аш“ йашки пулнă. Мĕн ашĕши ку тутлăскер?

— Ђей йашкă?—тесе ыйтаť апат параканнинђен.

— Какой Йашкă? Йа не Йашкă, Машшă. Йашкă в той комнăттĕ!—терĕ хирĕç апат паракан майра. Каланине тăнланаймарĕ.

Ваçли муђи, тăнланмалларах пултăр тесе:

— Вот еттă ђам-ђам каккуй?—терĕ йашки çине пӳрнипе тĕллесе кăтартса.

Лешĕ тăнланђĕ. Ăнлантарса пађĕ.

Хӑйаматла йапала! Каллех Сойӑ... Сойӑран тунӑ йашка.

Илсе пыҫӗҫ аш тураса тунӑ коклет. Ҫисен тутлӑ. Кӑвакал ашӗ тути калаҫ.

Мӗн каламалли пур ӗнтӗ—каллех сойӑран тунӑскер пулнӑ.

Коклет ҫине йухтармалли ҫӑра шӳрпене те сойӑранах тунӑ мӗн.

Тата... шапшурӑ пулккӑ (кулаҫ). Сӗтпе ҫӑрнӑ пек тутлӑ. Ӑна та,—Сойӑ пулкки, тесе ҫийеҫҫӗ...

— Мӗнле хӑйаматлӑскер вара ку Сойӑ?

Ҫӑмарта хӑпартни пит тутлӑн туйӑннӑ Ваҫли муҫийе. Хур ҫӑмартиши ку? Ҫӑх ҫӑмартиши?—Ҫӑтаймарӗ. Ыйтрӗ:

— Ҫей йайтсо?

— Сойӗнӑ.

Сойӑ тунӑ ҫӑмарта.

Ҫӑхӑт. Пасар ҫӑхӑҫӗ. Ку та Сойӑн.

Вот пыр та калаҫ вӑл Сойӑпа! Ӗне марши вӑл Сойӑ... Вырӑссем ӗнесене ҫын йаҫӗпе ҫӗнеҫҫӗ...

Аш кукли (паштет). Паллӑ ӗнтӗ—ку та „Сойӑ ашӗнҫен“ тунӑскер пулнӑ.

Воспоти! Ытгисем хаваслансах ҫинӗ аш куклине Ваҫли муҫи активсе те пӑхас темерӗ. Йӗрӗнҫӗ. Тыха ашне ҫисе курнӑ та, ҫын ашне ҫисе ҫылӑха кӗрес марха, терӗ.

Хӗрӗх йышши апат-ҫимӗҫ ҫитерҫӗҫ веҫҫӗрта. Кашни ҫимӗҫнех ҫав тӗлӗнмелли Сойӑран тунӑ пулнӑ. Тӗлӗк тӗлленместӗпши епӗ капла тесе, Ваҫли муҫи хӑйне хӑй купарҫинҫен ҫӑтӑр ҫӗпӗтсе пӑхаҫ. Хытах ҫӗпӗтрӗ. Ай!—тесе кӑшкӑрса йаҫӗ ыратнипе, пӗтӗм халӑх илтмелле.

„Ай“ тенӗрен, ҫирленӗ пуҫ ӗнтӗ ку тесе,

тухтӑрсем емел илсе пыраççӗ ун патне. Мӗнле йышши емел илсе пынӑ терӗр есӗр? Неушлӗ пӗлеймерӗр?! Емелне те сойӑран тунине илсе пынӑ.

Тӗлӗнсе çак сӗтел пекех хытса каймалла вӗт кӗрик кам та!

Тухтӑрсем Васли муђи ал тымарне тытса йун тымарӗ мӗнле тапнине сӑнарӗç. Пӑхаççӗ—Васли муђи аллисене çумасӑрах хӑнана килнӗ мӗн. Алли хапхура та пылђӑклӑ, тет.

Çума хушрӗç. Пит çумалли савӑт патне йертсе кайрӗç. Супӑӈ пађӗç. Сойӑ супӑнӗ ӗнтӗ çакӑ, теççӗ хӑйсем.

Супӑнӗ те, пурте... пӗтӗмпех сойӑран тунӑскерсем! Акӑ мӗнле тӗлӗнмелле йапаласем пулаççӗ тӗнђере!

Веђђӗр пӗтиђђенех Васли муђи çав тери пӗлесшӗн çӳрерӗ те, анђах тем ђул тӑрӑшсан та, вырӑсла ђухлайман пирки, Сойӑ камне-мӗнне пӗлеймерӗ. Пӗлмесӗрех автансем авӑтнӑ вӑхӑталла хваттерне таврӑнђӗ.

*
* *

Васли муђи халӗ ӗнтӗ сойӑ камне лайӑх пӗлсе тӑрать. Тӗнђере сойӑран усӑллӑрах ӳсен-пулан урӑх çукки çинђен те, илтнӗ анђах мар вӑл... курса та пӑхнӑ. Хӑй çисе пӑхнӑ апат-çимӗççемсӗр пуçне, сойӑран сӗтеклӗ вылђӑх апаđӗ çукки çинђен те илтнӗ вӑл.

Ђӑнах та ӗнтӗ, Васли муђи калашле, усӑллӑран та усӑллӑ йапала вӑл „сойккӑ".

Ахалђрен мар ӗнтӗ китайсен револђутсионерӗ Сун-Йат-Çен çапла каласа хӑварнӑ:

— Китай халӑхӗ телейлӗ пулӗ, мӗншӗн тесен вӗсен сойӑ пур, тенӗ.

Пирӗн Ђӑваш ҫӗршывӗнђе халӗ сойӑ ҫук та, ҫапах та, малалла пулассине шанса, епӗр те лайӑххӑнах калама пултаратпӑр:

— Пирӗн колхоссем телейлӗ пулӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсен сойӑ пулӗ, тетпӗр.

Килӗшетӗри, колхоҫнӗксем, ҫакӑн пек лосӑнк кӑларса хурас тетӗп епӗ сирӗн ума:

„Акӑр ӑшаланӑ ашпа хӑймаллӑ сӗт!“

„Акӑр ђӑх коклеђӗсемпе хӑйма поматкисем!“

„Акӑр тутлӑ тӑпӑрђӑпа шӑккалат!“

1931-мӗш ҫул.

## Хӑрушӑ кун.

Хӑйар шӳрпи нумай ҫинӗрен Хӑйаршӳрпи Хветӗр тесе хушамат панӑ ӑна йал ҫыннисем. Ашшӗ унӑн хӑйар шӳрпи пулман, конешнӑ,—Упрам йатлӑ пулнӑ. „Хветӗр Упрамђӑ“ темелле пулнӑ та ӑна ашшӗ йађӗпе ђӗнес пулсан.

Пӗрре ҫав Хӑйаршӳрпи Хветӗр вӑрман каснӑ ҫӗртен калама ҫук хытӑ ӗшенсе тавӑрӑннӑ. Ӗшенмесӗр, вӑрман касасси—хӑнара-ӗҫкӗре ларасси мар. Ывӑнтарат̆. Ывӑннӑскер, иртерех пулсан та, Хветӗр канма выртнӑ. Канма выртсассӑн, куҫа хупасси ҫинђен шухӑшланӑ вӑхӑтрах, хӑлтӑр! тутарнӑ сасса илтсе картах сиксе илнӗ.

— Хӑлтӑр! Шан-шан!..

Хветӗр хӑранипе ура ҫине сиксе тӑнӑ.

— Хӑлтӑр-р-р!.. Шӑн-шан!..—тутарнӑ каллех пӳртре.

— Воспоти!—тесе сӑхсӑхса илнӗ Хветӗр.

— Ђăнкăрт!—илтĕнсе кайнă кăмака умĕнђи турђка сасси.

Хветĕр ура çине тăнă та, кам çавăн пек аташса çӳренине шырама тытăннă.

Никам та курăнман пӳртре.

Хветĕр хăраса кайнине пĕрене шăтăкĕнђен таракансем пăхса тăнă.

— Фу ты!—тенĕ Хветĕр.

Тĕпелте ларакан сĕтел вырăнтан тапранса Хветĕр патне тăват урисемпе утса пырса тăпăрттăпăрт туса илнĕ.

— А-ă-ă! Шуйттан кĕвенти!—тенĕ çын сассипе йăвăçран тунă сĕтел.—Шуйттан та мар ес, етем те мар...

Сĕтел хăйĕн арђине (сунтăхне) уçнă та, лађ сурнă Хветĕрĕн ырхан пиђĕ çине...

Хăлтăр-хăлтăр утса пынă Хветĕр патне ухват.

— Пĕлетни ес, тенĕ вăл Хветĕре пĕр йĕппипе йунаса.—Пĕлетни есĕ, шуйттан, епĕ тутлă шăршăллă аш йашки куршакне (ђӳлмекне) тытса пăхманни миçе уйăх çитнине,—тенĕ те, куршака йăтнă пек, Хветĕре икĕ тимĕррипе мăйĕнђен йарса илсе çаклатса туртма тытăннă.

— Ман çийе хăйар шӳрпипе паранкăсăр пуçне нимĕн те лартмастăн,—тесе хайаррăн кăшкăрнă ђарăнма пĕлмен сĕтел. Мункунтанпа аш йашки курман. Кайатăп кунтан. Колхоса куçатăп.

Тăвар суланђи сулланса вăрçнă:

— Ман ăшри тăварпа тип çăкăрпа сухан таврашĕсем анђах пуçса çийетĕн. Тăварне те кăвакарнине анђах илетĕн. А-ă, хыт кукар!..

Ђаштăр! сапса йанă хăйĕн тăварне (Хветĕр йенелле) тăвар суланђи.

Хветĕр аран айаккала пăрăннă. Пăрăнман пулсан тўмен тăвар муклашкисем куçĕнџенех тивмелле.

— Ак парам сана хампа! тесе пынă турџăка.— Çатлаттарса йарсан ак çамкунтан!

— Çат-çат-çат! – туса тăнă Хветĕр çамки умĕнџе кашăксем.—Пĕр ерне уш вĕри йашка курман.

— Џăнкăр!—сиксе пырса ларнă тата Хветĕр умне хура хуран.—Мĕн пăхса тăратăр? Тавай ăна ĕнселесе йарар лайăхрах. „Пĕрлешўре вăй" теççĕ етемсем. Пурте пĕрлешĕпĕр те таккойски парса йарар.

Пурте кĕпĕрленсе пыраççĕ Хветĕр çине. Шăри-шари, шăй-шай! Џăнк-џанк!.. Шăлтăр-шарт!.. Тўнт!.. Хăнтăр-хонт!.. Халт!.. Ши!..

— Колхоса кĕмесĕр пире выçă вĕлерет. Шăнк-шанк!..

— Ай-уй! Хурах!—кăшкăрса йанă Хветĕр. Пăлтăр-палтăр ўке-ўке аран тухса тарнă вара вăл пўртрен.

— Хăвалăр ăна, хăвалăр!—тенĕ сасăсем пўртрех тăрса йулнă вара.

Кусем çине шалăпă пама Хветĕр йалсовета џупаť.

— А-а! Есиха!—тенĕ сасă илтĕннĕ Хветĕр йалсовет хапхи умне пырса тăрсан.

Хайхи кашăк-тирĕксем, тăвар суланџисем кăшкăраççĕ пуљха тесе кайалла çаврăнса пăхнă мĕн те Хветĕр, пĕр йапала та курăнман.

— Мĕнле хăйамат ку?

— Сисетни ес, темиçе кун ĕнтĕ епĕр пăкăр-пакăр! туса çўретпĕр?

— Ман пыршăсем калаçаççĕ,—туйса илнĕ Хветĕр.

— Пыршă йулташсем,—тенĕ çемçен Хветĕр.— Мĕн çитмерĕха сире? Манăн йалсовета каймалла, сирĕнпе калаçса тăма вăхăт çук.

— А-а! Пăкăр-пакăр!.. Есĕ пирĕнпе калаçассăн мари! Ах, ты, пăкăр-пакăр пӳрократ! Ĕçлĕ вырăна кĕмесĕрех пӳрократланса карăни? „Капкăна“ çаклатмалла сана.

— Ђухăн епĕ,—тенĕ айăплă сасăпа Хветĕр.— Тыррăм пĕтсе çитрĕ. Пурђђĕ те, йулашкине кулак парăмшăн илсе карĕ. Каçарăр ĕнтĕ мана. Кăшкăрма пăрахăр. Кулак илсе кайман пулсан...

— А-а, сан кулакшăн пур, пирĕншĕн çук,— тенĕ мăн сасăпа хырăм.—Кулакран уйрăлса колхоса кĕреймен пиркийех пире асап кăтартатăн. Пăкăртаттарăр хытăрах! Кăшкăрăр! Хурах!.. Кравул!.. Выçă вĕлереççĕ!. Çăлăрах!

— Хурах!..

— Хурах!..

— Ах, тур хупламанскерсем! Ђарăнăр, мурсем Ак пĕрре хырăмран паклаттарса йарсан.

— Ђарăнмастпăр!—хайаррăн кăшкăрса йанă вĕтĕ пыршăсем.—Çитĕ кун ђухлĕ тӳснипе. Револђутси пулни 14-мĕш çул—вăл халиђђен те колхоса кĕресси çинђен аса илмест. Кравул!..

Пыршăсем пĕрин çине пĕри хăпарса тăрса тата хытăрах хурахлатма тытăннă.

— Уйăрăлса кайап ак,—тенĕ пуç (конешнă Хветĕр пуçĕ). Тăм пуç теме пуçлĕç мана çынсем, кăçал çураки умĕн те есĕ колхоса кĕмесен. Сана пула тăм пуç йатне илтес пулаť. Ак, уйрăлса кайсан пурăн вара пуççăр. Мĕн лартăнха вара

ман вырăна мăйу çине? Кăшкар лартса йарсан, çынсем кулса вилĕç.

Ухмаха йертĕм пуљ тесе, Хветĕр пуљнитсана ђупнă. Йероплан пек ђупнă хăвăртрах пуљнитсана çитес тесе.

Йур айĕнђен пĕр уйăх ĕлĕкрех тухнă калђасем хĕвел çинелле савăнса пăхнă. Çӳле, пĕлĕт патне вĕççе хăпарнă тăрисем иккĕн харăс, тăрри, тăрри ... çеçеттин, çеçеттин!—тесе, илемлĕ çинçе сассисемпе Петĕр Йăванĕн (Хветĕр кӳршин) контрактатси йĕркипе акнă ани çинђи йешĕл ӳссе ларнă калђана мухтаса йурланă.

Хветĕр хăй ани тĕлне çитнĕ. Калђисем çинçе сассисемпе йара панă йурра:

Çӳлте кайăк вĕçнĕ ђух
Кам урине курни пур.
Çум курăкпа ӳснĕ ђух
Кам калђине курни пур...

Пăçăр Петĕр Иăванĕ ани тĕлĕнђе „тăрри-тăрри!“ тесе йурлакан кайăксем: трийĕр, трийĕр!— тесе вĕççе тăнă тӳпере.

Хветĕр хăйĕн ани çинђе ӳсекен калђасенђен сиккипе ђупса иртсе кайаť. Ытти çынсен анисем çинђе калђасем çавна кура: хи-хи-хик! тесе кулса йулаççĕ. Çапла „хи-хик“ тесех кулнă.

Хура пусса, Хветĕре хирĕç, хăйсен йалĕ кĕтĕвĕ пынă. Хветĕре курсан пилĕк сурăх, пĕр сысна, тата пĕр ĕне урса кайнă выљăх пек, ђупма тытăннă Хветĕр патнелле.

— Му-ук!.. Ме-ек. Нăрик-нăрик! Контрактатси... Ăшă вите. Лайăх ăратлă така... вăкăр... тенĕ сасăсем сывлăша çураççĕ.

Хветĕр ăна курсан (ку ырра маррине сиснĕ ĕнтĕ) çĕтĕк çаннипе хура тарне шăлса илнĕ те, тавай мĕн вăй пур таран кайалла тарма. Ђупнă-ђупнă. Стоп... Хветĕрĕн çӳç-пуçсем каллех хăмăш пек вирелле тăрса кайаççĕ. Çулпа, ăна хирĕç сухапуçсем, тырă акмалли кунтăсем, йăвăç сӳре-сем кĕмсĕртеттерсе пыраççĕ.

Хветĕр ни кайалла, ни малалла.

Выђăхсем Хветĕре çавăрса илеççĕ. Лаши ка-таран пит хайаррăн кĕçенсе пырат̆:

— Мана кантарас теместĕн. Çынсем, колхоса куçнисем трактăрсемпе суха тăваççĕ, нăй-най!.. Ме-ек! Нăрах!..

Ĕни майракипе ăсса илнĕ Хветĕре, сурăхĕсем мăй çине хăпарса ларнă. Лаши нăй! туса,—шарт! тапса йанă. Пĕтрĕ Хветĕр!

— Хурах! Хурах!..

Хурах кăшкăрма сасси тухмаст̆.

— Хура-а...

— х-х-х!—тесе вăранса сиксе тăнă Хветĕр. Шапăртатсах хура тар йухнă Хветĕр çамки çинђен çытар çине.

* * *

Халĕ Хветĕр колхос ђленĕнђе тăрат̆. Х..йĕн колхосри йулташĕсемпе çуракине хатĕрленет. Вăл колхоса епĕ те пырса куртăм. Лайăх хăналаса йађĕç. Хветĕр мана ăсатса йађĕ. Ăсатса йанă ђухне хăй тĕлĕкĕ çинђен кĕнекере çырса пĕлтер-ме хушрĕ. Епĕ çыртăм. Есĕр вуларăр. Ыттисене те вуласа кăтартăр.

1930-мĕш çул. Йанвар.

## Путаканӑн улӑм пӗрҌи.

Петӗр КӗркурҌҌӑ арӑмӗн пиҌӗ ҫырла шывӗпе ҫунӑ пек илемлӗ пулнӑ, куҫӗсем ҫине пӑхсан, унта макнит пур пек, темӗскерле ҫапах ун ҫине пӑхса тӑрас килнӗ ҫынӑн, ҫӳллӗ кӑкрисем, вӑйлӑ аллисем, тӗреклӗ урисем арӑм сывлӑх йенҌен те килӗшӳллине палӑртса тӑнӑ.

Ҫавӑн пек илемлӗх ҫӑлкуҫӗ тапса тӑракан питлӗ-куҫлӑ арӑма упӑшки пит йуратнӑ. АнҌах, калас пулаӗ, йуратупа тулнӑ Ҍӗрере те хӑш Ҍухне пӑттӑм-пӑттӑм хура пӗрҌӗсем пулаҫҫӗ.

— Савнӑ арӑмӑм кунӗн-ҫӗрӗн Ҍӗрере лараӗ. АнҌах, епӗ унӑн Ҍӗринҍе ҫавӑн пек ларайрапши? Пӗлесҍӗ. Вӑл урӑххине йуратса пӑрахсан... пӗтрӗ вара манӑн телейӗм, пӗтӗм шанҍӑкӑм,—тесе шухӑшласа ҫӳренӗ Ҍас-Ҍасах, кӗвӗҫсе.

Петӗр КӗркурҌҌӑ арӑмӗпе кӗвӗҫнине йал арӑмӗсемпе хӗрӗсем анҌах мар, арҫынсем те пӗлкеленӗ.

— Питне кӑштах хӑрӑм сӗрсе ҫӳремелле марши санӑн?—тенӗ Петӗр КӗркурҌҌӑ пӗре арӑмне.

— Ма?

— Йалӗпех сана каҌҌа илесшӗн пулӗҫ, тетӗп.

* * *

Хулана колхос ӗҫӗпе каймалла унӑн пайан. Ирех каймалла.

Арӑмӗпе иккӗш ҫывракан сарай шӑтӑкӗ витӗр ирхи хӗвел пӗрҌисем кӗрсе кайса ӑшшӑн пӑхсанах, Петӗр КӗркурҌҌӑ вырӑн ҫинҌен сиксе тӑнӑ.

Çав вăхăтра Петĕр Кĕркурђђăн сăмсине тутлă шăршă кăтăкласа илнĕ. Çĕмĕрт çеçки çурăлнă шăршă тес—çеçке çурăлмаллăхах ӳсейменха унăн сарай хыçне ик çул ĕлĕкрех лартнă çĕмĕрђĕ. Улмуççи ђеђекĕ шăрши те мар ку,—лартайманха Петĕр Кĕркурђђă улмуççине.

Сăмси шăтăкĕсене ђармакласах шăршласа пăхаť Петĕр Кĕркурђђă йĕри тавралла. Унтан шарт! çапса йараť аллине шалавар тăхăнман пĕççи çине.

— Ťфу! Майра шăрши ку,—тет.—Туххи шăрши. Оттеколон тени!

Манран кĕретши ку, арăмран кĕретши,—тесе, малтан хăйĕн айалти кĕпине, ӳђĕсене нăш-нăш туса шăршласа пăхаť, унтан çывăракан арăмĕн кĕписемпе çӳçпуçне шăршлама тытăнаť.

— Ах, шуйттан! Ара, арăмран тухаť мар-и ку, туххи майлă шăршă?! Çывăрма выртнă ђухне ним шăрши те кĕмесђĕçке унтан. Сухан шăрши пурри сисĕнкелеђђĕ те...

Унтан çак шухăш кĕрсе вырнаçрĕ ун пуçне:

— Пĕрле çӳренĕ ђухне уђиттĕлрен тутлă супăњ шăрши кĕркеленине астăватăп. Çавах аппаланаť ĕнтĕ тухxисемпе. Çĕрле çывăрса кайсан арăмăн уђиттĕл патĕнђе пулнă ĕнтĕ. Çавăнпа та арăма уђиттĕл шăрши çапнă. Ах, каналйĕ! Ку хитре арăмпа пĕтес пулаťĕç!

— Понк!—тутарђĕ Петĕр Кĕркурђђă арăмĕн çемçе айаккинђен ђышкипе.

— Воспоти, воспоти!—тесе картах сиксе тăрса ним пĕлмесĕр унталла-кунталла пăхса илђĕ арăмĕ.

— Парам сана „воспоти“. Кама йăпатса килтĕн çĕрле?

Çат!—çутăлса илҫĕ арăмĕн пиҫĕ Петĕр çупкинҫен.

„Ним пĕлмен пек пулнă“ арăм йĕрет. Упăшки пушшех çиленет. Çупкăпа та, ҫышкăпа арăмне.

Хулана кайасси пулмарĕ вара унăн пайан. Кунĕпе килте çӳрерĕ арăмĕ мĕн тунине сыхласа.

* * *

Тепĕр ирхине каллех истори ĕнерхи пекех пула иртет. Арăмĕнҫен пайан ир туххи шăрши ĕнерхинҫен те ытларах кĕрет.

— Неушлĕ ĕнер хĕнени харама кайса пĕтрĕ,— тет пайан вăл ним шухăшлама пĕлмесĕр.

Каллех харкашу. Каллех йĕрӳ.

Унтан тепĕр ирхине туххи шăрши кĕнипе пĕрлех, Петĕр Кĕркурҫҫă сарай урайĕнҫе пиншак выртнине курать. Малтан хура путек килсе выртнă пуҫ ĕнтĕ, тенĕ вăл. Тытса пăхсан, путек пулман мĕн, пиншак пулнă. Хăйĕн çĕтĕк пиншакĕ мар, сукнаран тунăскер. Пиншакĕнҫен те çав шăршах кĕрет иккен. Арăмне те, выртса йулнă пиншака та пĕр шăршах çапнă.

— Кам пиншакĕ-ши ку? А-а! Пĕлтĕм. Уҫиттĕлĕн ку хăйамат!.. Арăм патне килсен, пиншакне ӳкерсе хăварнă...

Уҫиттĕл пиншакĕ тесе йăнăшмасть ĕнтĕ Петĕр Кĕркурҫҫă. Колхос ĕçĕпе кирек хăçан та пĕрле çӳренĕскер, пĕлет ĕнтĕ вăл уҫиттĕлĕн пиншакне.

Ир йенлелле тин çывăрса кайнă арăмне вăратас темерĕ. Мĕн пулĕ, мĕн килĕ, малалла мĕн пулассине сăнăпăр, терĕ пулмалла. Пиншака пуçтарса хуҫĕ. Вăранса тухнă хĕвел ун çине кулса пăхрĕ.

* * *

Тепĕр каçхине Петĕр Кĕркурҫҫăн армана çăнăх авăртма кайма ҫерет çитнĕ. Каймалла та, анҫах арăм шаҫăклă марçке. Мĕнле шанса хăварăн ĕнтĕ ун пек арăма. Шухăшлаŧ, шухăшлаŧ те, арăмне пӳрте питĕрсе хăвараŧ, уççине хăйпе илсе кайаŧ. Петĕр арманта. Арăмĕ çĕрĕпе куçне хупман, çĕрĕпе йĕрсе выртнă.

Анҫах вăл ĕсĕклесех йĕрсе выртнине илтекенни никамах та пулман. Илтекенни...

Пĕтĕм тӳпене хура пĕлĕтсем хупласа илнĕ. Çилпе наҫар хапхасем силленсе сасă кăларса тăраççĕ. Петĕр Кĕркурҫҫă хапхи пули-пулми çиле парăнмасŧ. Çирĕп вăл. Çаклатасса та лайăх çаклатса çийĕнҫен кантрапа паллă туса (такам уçсан паллă йулмалла) çыхса хăварнă ăна кĕçĕр хуçи.

Петĕр Кĕркурҫҫăн хапхи сасă паҫĕ, анҫах çын тĕртнипе мар... такам ĕмĕлки каçса карĕ ун урлă.

Емĕлки унталла-кунталла пăхкаларĕ те, тӳрех иртнĕ каç Петĕрпе арăмĕ çывăрнă сарайнелле йăпшăнҫĕ. Сарай тункатинҫен аллипе тытса ҫылайҫҫен итлесе тăнă хыççăн, ҫĕрне çине тăрса утса пыҫĕ хуçасăр выртакан тӳшек патнелле.

Хыпашларĕ вырăна. Ҫуп тумашкăн пулмалла.

Хыпашланине сиссен, вырăн çинҫе выртаканни ме-кек! тесе çуйăхса çĕрлехи сывлăша йантратса йаҫĕ.

Арăм вырăнĕнҫе выртаканни Петĕр Кĕркурҫҫăн măн măйракаллă каҫаки пулнă. Ку шуйттан пулҫĕ епĕ хыпалани тесе, етем ĕмĕлки сăхсăхсах тарма тытăннă вара хал çитнĕ таран унтан.

Ту хыçĕнҫен хĕвел пĕрҫисем кармашланса пăхма пуçласассăн, Петĕр Кĕркурҫҫă урампала пĕҫҫенех утса киле тавăрăннине куртăмăр. Килкарти хапхине уçсанах, ăна хирĕç каҫаки, хуçа кĕрес алăкпа урама курăк çиме тухас тесе ҫупса пынă.

— Ťфу!—тенĕ Петĕр Кĕркурҫҫă каҫака шăршипе кайалла ҫакса.—Каҫакана та туххи шăрши çапнă. Мĕне пĕлтерет ку?!

Петĕр Кĕркурҫҫă ҫылайҫҫен сывлăм сыпнă курăксем çинелле пăхса тăнă тĕлĕнсе.

*
* *

Тепĕр кунне Петĕр Кĕркурҫҫăпа арăмĕ ĕлĕкхи пекех çывăрма тула выртнă. Темĕн тĕрлĕ ыйăх тăмани пырса аптратсассăн та, Петĕр Кĕркурҫҫă кĕçĕр çывăрман. Арăмĕ çĕрле уҫҫиттĕл патне кайассине сыхланă. Анҫах арăмĕ çĕрĕпе те вырăнтан хускалман. Ирхине те унтан (арăмĕнҫен) туххи шăрши кĕмен.

Тепĕр каçхине те çавах. Çĕр лăпкă иртнĕ. Вицçĕмĕш каçхине вăйпах хупăнасшăн куç хупаххисемпе кĕрмешсе выртнă вăхăта, Петĕр Кĕркурҫҫă хапхаран такам кĕрсе кайнине илтет. Пăхаť—хапхаран кĕнĕ ĕмĕлке çын сисмелле мар йăпшăнса вĕсем çывăрнă сарайне пырса тăҫĕ. Итлерĕ. Петĕр Кĕркурҫҫăпа арăмĕ çывăрнă вырăн патне пырса тем турĕ те, сарайне туххи шăрши тапса тухрĕ— уҫиттĕл пиншаккинҫен кĕнĕ шăршах.

Петĕрĕн мишук пулнă пуç хыçĕнҫе. Мишука илет те вăл, хайхи пынă çынăн пуçне тăхăнтартса лартаť. Ҫăрмаланаť ĕмĕлке, мăшлатаť, анҫах сассине кăларма хăраť.

Ну, уҫуклана вара Петĕр Кĕркурҫҫă мишукри ҫынна. Сылтăм ҫышкипе те уҫуклана, сулахайпе те сăтăркаласа илнĕ.

Хĕнесен-хĕнесен, мăшласа çеç тăракан мишукри çын анҫах йынăшса илнĕ.

— Петĕр Кĕркурҫҫă! Петĕр Кĕркурҫҫă! Çитĕ ĕнтĕ кун ҫухлĕ хĕненипе. Пĕреллĕхе каçар ĕнтĕ,—тенĕ йăлăнса.

Тĕлĕнет Петĕр. Мишукри сасă уҫиттĕл сасси пулмарĕ. Пĕлтĕрҫҫенех çил арман тытнă Упрамăн сасси пулҫĕ.

— Кун пек сухаллă, ватă йенелле сулăннă çынна мĕнле йуратнăха манăн арăм,—тет Петĕр Кĕркурҫҫă иккеленсе.

Мĕнле йуратасси... Йуратуран пулман мĕн ку ĕç.

Калас пулаҫ, Петĕр Кĕркурҫҫăпа уҫиттĕл иккĕшĕ пĕр-пĕринпе пит те лайăх туслашса кайнă. Пĕрле вĕсем тăрăшса колхос та уçнă йалта. Колхос претçетаттĕлне суйлана Петĕр Кĕркурҫҫăпа унăн çывăх помошнĕкĕ (уҫиттĕл) хушшине йус кўртес тесе, çав арман хуçи пулнă кулак Петĕр Кĕркурҫҫăн ҫипер ыйхăпа çывăракан арăмне туххисем сапа-сапа хăварнă. Уҫиттĕл пиншакне вăрласа тухса Петĕр Кĕркурҫҫăпа арăмĕ çывăрнă сарайне пăрахса хăвараканни те Упрамах пулнă.

Иккĕшĕн хушшине харкашу кўрсе, колхоса сийен кўрес тенĕ мĕн вăл çапла тунипе.

Тата: арăмĕ уҫитле йуратни çинҫен пĕлсен, Петĕр Кĕркурҫҫă хуйхăпа ĕçме вĕренсе кайĕ те çитрĕ вара манăн ĕç. Претçетаттĕл ĕçме вĕренсен колхоса салатма та çăмăлланаҫ, тенĕ пулнă вăл.

Мĕн тетĕн, вулакан? А-а! Ăхă! Çапла çав ĕнтĕ вăл, çапла: кулак колхоса хирĕç çĕçĕпе те ĕçлет шăрпăкпа, ăвăпа та ĕçлет, ђĕлхипе те ĕçлет. Ђĕлхипе ĕçлеме çак калаври май тума та пултарать. Путакан улăм пĕрђинђен те пулин тытса йуласшăн, тесе ахалех каламан пуђ ĕнтĕ çав... ăслă çынсем!

1930-мĕш çул.

## ПЛАН!.. план!.. план!..

План... План... План... Пысăк плансем пуçра. План-н-н!.. План-н-н!.. Тон!.. Тон!.. План-н-н! 55 пăтлă ђан план!..—тесе Паххомăв шухăшĕсене инçете илсе кайать. Çĕнçул каç çĕнĕ шухăшсем. План-н!.. План-н!..

План тăрăх, „таса атте“ Паххомăв халăхпа лăках тулнă ђиркӳн амвонĕ*) çинђе сарăлса тăрать. Хăй шухăшласа кăларнă çĕнĕрен те çĕнĕ ђиркӳн пупĕ вăл. Халăхпа пĕрле кăнтăрлахи кĕлĕ тăвать.

— Ашшĕн, ывăлĕн, çветуй сывлăшĕн йађĕпе пайанхи çпектаккăлĕн пĕрремĕш пайне итлĕр!— тесе Паххомăв кăнтăрлахи кĕлле пуçласа йарать.

Хор!

— Итлетпĕр, итлетпĕр, итлетпĕр,—тет нотлă кĕвĕпе.

— Ырă кăмăлпа фискуђттур тума тытăнар!

Халăх сăхсăхмалли фискуђттур тума тытăнать.

— Малалла лосăнксене итлеме пуçăрсене тайăр!

*) Амвон—ђиркӳн ђаршавлă, ик йенелле уçăлакан малти алăк умĕнђи пуп сем тăракан вырăн.

Халăх кăмăллăн тайат̆.

— Çавалстройа тăвас ĕç хăвăртланса пытăр тесе, çĕнĕрен хапрăк-савăтсем тăвас ĕç ӳссе пытăр тесе, çулйĕрсем тăвас тĕлĕшпе Автотор вăйлăрах ĕçлесе пытăр тесе, фискуљттур туса илер!

Халăх сăхсăхат̆.

— Копператив лавккисем умĕнђе тăрсă каймалли ђеретсене пĕтерес тесе, тавар хакĕсем 10-шар прођђăн йӳнелтђĕр тесе, фискуљттурă туса илер.

— Хамăрăн ырă çынăмăр йалсовет претçетаттĕлĕ Харлампии Хветуђĕшĕн, ăна ырă кун-çул, сывлăх, канлĕх патăр тесе, ђăркуççи çинђе тумалли фискуљттурă туса илер.

— Хамăрăн аслă, хăватлă, мухтавлă Марийасене арçынсемпе пĕр танах хисеплесе, хамăра-хамăр пĕтĕм ђунăмăра хĕрарăмсем аллине парар.

Нумай Паххомăвăн шухăшласа кăларнă ектенин*) сăмахĕсем, пит нумай, анђах вĕсем çинђе ђарăнса тăрар мар, кĕлĕн тепĕр пайне итлесе пăхар.

— Халĕ ман пек ĕççĕр йулса выçă ларакансене çимелли парса пулăшас ырă шухăшпа, проçвирсем илсе хатĕрлесе хурар!

Кĕпĕрленсе пырат̆ халăх проçвир майри патне.

— Мана пĕрре.

— Ак укçи.

Проçвирĕсем йĕкĕрлĕ. Çине çурлапа млатук кĕлетки пусса тĕрленĕ.

— Халĕ ĕнтĕ ырă кăмăлпа çтена хаçаđĕ кăларма тытăнар. Халăх пилленипе, ретактăрĕ епĕ пулам. Саметкисене поминани кĕнекисем çине çырса проçвирпа пĕрле парă-ăр!..

*) Ектени—йурлакансем: „ей турă çырлах“, „пар турă“ тейес умĕн пуп (йе тийаккăн) калакан сăмахсем.

Халăх поминани кĕнекисем çине çырнă саметкăсем çине, кашни 20-шер пус кĕмĕл укçа хурса, сторăш урлă, Паххомăва тыттарат.

Укçа нумай. Паххомăв савăнат. Ĕçсем йатламалла мар. Ниђђево! Пуйма пулат.

— Халĕ Пиршă Трутара ĕç тупайманнисем вађђи шертвăни пуçтарар!—тет Паххомăв каллех алтартен.

Ђиркӳ старăсти крушкăпа укçа пухса çӳреме тытăнат. Ђăнкăрт, ђăнкăрт!—тухса ӳкеççĕ тар йухтарса тупнă пăхăр укçасем старăстă крушки ăшне. Крушкă тулат.

— Халĕ ушкăнпа апат çитермелли столовăйри йĕркене аса илсе, кунта пухăннă халăх ушкăнĕнђе тăракансем пурте, „приђеç" йатлă киттайски ђей ĕçме килĕ-ĕр!..

Кашăкпа приђеç сыптарат сăваплă Паххомăв. Шăнкăрт-шăнкăрт! ӳкеççĕ укçасем унпа йунашарах тăнă сторăш тарелкки çине.

Приђеç йатлă киттайски ђейе астивменни пĕри те йулмаст. Малалла Паххомăв хĕреспе тухат.

— Пĕр-пĕрне ђуп тусанђир йерме пултарнине аса илсе, çак хĕрлĕ хĕресе ђуп тăва-ар!

*

* *

— Тфу!..План, план!.. пл-лани ку! Шуйттан! Мăн сăмса! Сăмсу мăнă та ăсу кĕске, тесе хăйĕн пуçне ђышкăлама пуçларĕ Паххомăв ури çине сиксе тăрса.—Çавăн пек кĕлĕпе çынна мар, йытă хӳрине те ђиркӳ йенелле туртаймăн. Кĕлĕ пулђи ку сан? Кĕлĕ мар, шуйттансем шухăшласа кăларнă комети пулса тăђĕ! Никам та вăл кометийе ĕненес çук. Урама тухма памĕç—кулса вилĕç. Со-

вет влаçне ку кĕлĕпе тытаймăн. Санăн, мăн сăмса, ун пек кĕлĕсем мар, çĕнĕрен, халиҫҫен пулман тĕн шухăшласа кăлармалла!

План! План! Çĕнĕрен план. Тон-тон! План.. Паххомăвăн шухăшĕсем вĕçен кайăксем хĕл каçма кайнă ăшă вырăнсене куçса карĕç.

* * *

Çĕнĕ план тăрăх Паххомăвăн виçĕ çул хаҫă курман çӳçĕсем пăрçа урапи пек пулса кайнă, сухалĕсем карттин çинҫи Авраам „аттен“ пек сарăлса кайнă. Виçĕ çул! Виçĕ çул ĕнтĕ Паххомăв ăшă Турккестана килсе вырнаçни. Савăнăçлă паха кун. Виçĕ çул ĕлĕк хăй алтса тунă ăшă шăтăка пăрахса тухаҫ вăл пайан çутă тĕнҫене. Хăй ирĕкĕпе хăй килсе вырăнаçнă вăл çакăнта. Пушă хирте пурăнса, никам ҫăрмантармасан, пысăк йапаласем шухăшласа кăларма лайăх тесе килнĕ вăл кунта. Виçĕ çул хушши пур тĕнсен кĕнекисене, тата револютсийе хирĕç пыракансен нумай томлă кĕнекисене илсе, çĕнĕ тĕн шухăшласа кăларнă вăл халĕ. Ку тĕнпе пĕтĕм тĕнҫене хăй йенне çавăрса, польшевисăма таптама ĕмĕтленет. Ĕçпе тăранса пурăнакансене пурне те кăпиталçăсем аллине савса параҫ. „Кăтартăпха епĕ сире“ тет халĕ вăл çăмламас аллисене ҫăмăртаса.

Сасартăк план тăрăх ҫăмăртанмалли ҫышкăсем лаштах çĕрелле усăнҫĕç. Ҫăмăртаннă ҫышкисене курсассăн, Ҫăваш респуплĕкĕнҫи „Ҫăмăртанни“ йатлă комун аса килнĕ Паххомăва. Комунсем... Йал сиккипех колхоса куçса пыраҫ. Колхос—киввисене тымарĕпех кăкласа пĕтерекен çĕнĕ йăла. Темле çĕнĕрен çĕнĕ тĕн те колхосра тымар йа-

райрас çук. Ку план та... йытă хӳри тăршне те тăмарĕ. Урăххи кирлĕ...

Çунакан каллантски кăмака умĕнҫе шухăша кайса ларакан Пахxомăв „атте“ ҫĕркуççи çине ҫавсаланса пуçне тытнă аллине çĕрелле йаҫĕ те, çунакан вут çине пăхрĕ.

Вутти çунса пĕтнĕ. Кăварĕсем пăт-пат çуталкаласа илеççĕ те, куç умĕнҫех сӳнсе лараççĕ. Пахxомăв шухăшĕсем... шанҫăкĕсем кăварпа пĕрле сӳнсех, пĕтсех ларҫĕç. Сехет 12 çапрĕ. Çĕнĕ çул пуçланҫĕ. Тулта сивĕ шартлаттарни илтĕнҫĕ. Пахxомăва: сирĕлĕр кунтан, кивĕ тĕнҫепе кăпитал тарçисем!—тенĕннех туйăнҫĕ сивĕ шартлаттарнă тулти сасă.

1929-мĕш çул.

## Хурах!.. Хут вĕрентеççĕ.

I

Ăс-пуçĕ çавра çил пек çавăрăнать, ҫĕри çурăлса кайас пек аташать. Ыран ирхи апатсем çинĕ хыççăн ликпункта каймалла. Хут вĕренме тытăнмалла. Çынăн аҫи-пăҫи пур, аҫи-пăҫи мар—арăмĕ те пур, çинҫен тата сухалĕ те кĕскех мар—хут вĕренме йараççĕ! Самани çавăн пек!..

II

Урамра тапак хутаççи шыраса çӳрет тейĕр есĕр Ухливана курсан. Тапак хутаççи шырамасть. Ахаљ вăл пуçне уснă. Савăнăçлă шухăшсенҫен пушанса йулнăран унăн пуçĕ усăннă. Ликпункт, ликпункт пуçа устарать!

Йалсовет тӗлне çитрӗ. Пӳртне кӗҫӗ. Йалсовет çекреттарӗ çырса ларакан сӗтел умне ним шарламасӑрах пырса тӑрса ҫарӑнҫӗ.

— Мӗн патне килтӗн?—тесе ыйтрӗ аллинҫи руҫкине пӑрахса çекреттарӗ.

Ухливан, сӗтел умӗнҫе тӑрса шухӑша кайнӑскер, çекреттарӗн çинçе сассине илтмерӗ.

— Мӗн кирлӗ сана тетӗп?

— Мӗ-ӗн?—терӗ Ухливанӗ.

— Мӗн ӗçпе килтӗн тетӗп сана?

— Мӗн ӗçпе? Мӗн ӗçпе килнӗҫҫӗ-ха епӗ?

— Пӗлместӗп çав, çавӑнпа ыйтатӑп.

— А-а! Аса илтӗм, терӗ Ухливанӗ.—Аах! Пуç ыратать. Сӑмса шывӗ йухать... Халер йерҫӗ!.. Хут вӗренме каймалла. Каймасан йурамӗши? Халерпе ҫирлемен пулсан... Халер йерҫӗçкеха... Арӑм та хам пекех сывӑ мар—кӗнеке хутаççи çӗлесе пама йӗп те тытаймасть.

— Кӗнеке хутаççи нимех те марха... Халер... Халӗ кӗркунне халер пулма пултарати вара?... Ҫӑнах халер йерҫӗ пулсан, тухтӑр патне кайса хут илсе килес пулать. Вара сывалиҫҫен вӗренме çӳремесен те йурать. Сывалсан çӳрӗн.

Тухтӑрӗ хутне парас çукки паллах.

Ухливанӗ йалсовет патӗнҫен тухрӗ, ӗçӗ тухмарӗ. Хут вӗренессинҫен хӑтӑлаймарӗ. Йӑвӑр шухӑшсем пусса илнипе Ухливан пуçӗ каллех тапак хутаççи шыранӑ ҫухнехи пек усӑнҫӗ. Çанталӑк татах тӗксӗмленҫӗ. Ухливан киле утрӗ.

## III

Пӗр кун иртсен иккӗмӗш кунне Ухливан хулана çитрӗ мӗшӗлтетсе. Халӗ ӗнтӗ сапаланса кайнӑ

пуçĕнҫе пĕр шухăшран икĕ шухăш пулса кайнă: хут вĕренессинҫен хăтăлас шухăш та ĕçлеме выран тупас шухăш. Çав пысăк шухăшсене йăтса пĕр уҫрештени алăкĕ витĕр кĕрсе кайат Ухливан.

— Стурăша илместĕри?

— Илме йурат те... хут пĕлетниха есĕ?

— Хутне пĕлместĕп те...

— Хут пĕлместĕн пулин те... илетпĕр еппин,— тет пуçлăх. — Епĕ хам хут пĕлменлĕхе пĕтерекен йаҫейккă çекреттарĕ те, хĕлле ваљљи ĕç пулмасран хăранăҫҫĕ. Халĕ ĕнтĕ сана илсен ĕç тупăнат. Йаҫейксăра 69 ҫлен. 69-мĕш те харăс тытăнсан, пĕр камантрах санăн хут пĕлменлĕхе пĕтерсе хуратпăр.

Их, Ухливан!.. кăна илтсессĕн... тухрĕ тарҫĕ уҫрештенирен. Хулан пылҫăклă урамĕ тăрăх йероплан пек вĕçтерҫĕ йалалла. Ухливан ури айĕнҫен сирпĕнекен пылҫăк иртсе кайакан майрасене вăрçтарнă, анҫах Ухливан хăлхи вăрçнă сăмахсене илтмен,—Ухливан ĕмĕҫĕ татăлнине сиссен, хăлхи те хăйĕн параппан кантрине татса пăрахас тенĕ пулмалла—илтмест. Ара Ухливан, хут вĕренме çӳресрен хăтăлас тесе, вырăн шыр ама тухнăҫҫĕ. Вырăнĕ тупăнҫĕ, кашкăртан таракан упана çулăхнă пек, 69 çын харăс ăна хут вĕрентме тытăнасшăн пулнă. Латнă тарса хăтăлҫĕ.

Ех-хе-хей, Елекçей ашшĕ Ухливан, хут вĕренмеллех пулат пуљ сан!

## IV

Уф! тесе ҫаранна Ухливан уйа тухсан. Сапаланнă шухăшĕсене пухнă та, урине тăханнă çăпатинекаллех хула йенелле çаварнă. Çăпати хуçи хушнине итленĕ—кайнă тĕрме патне çитиҫҫенех.

— Тĕрмене кĕрес тетĕп.

— Мĕн тума?

— Ларма.

— Мĕн айăп турăн?

— Туман та, тăвас тетĕп.

— Малтан ту, тумасăр илместпĕр.

— Лайăхи халĕ тĕрмере ларма?

— Лайăхне калама пĕлместĕп... Йусанасса—йусанатăн ĕнтĕ унта. Хут пĕлместĕн пулсан—хут вĕрентеççĕ...

— Тĕрмере те хут вĕрентеççи?! Воспоти!.. Тур хăтартăрах!.. Апла пулсан кĕместĕп..

## V

— У-у-у!—йĕрет Ухливан арăмĕ.

— У-у-у!—йĕреççĕ Ухливан аҕисем.

— У-у-у!—йĕрет Ухливанĕ хăй.

— У-у-у!—уласа пырса тăҕĕ кӳршĕ арăмĕ.

— Есĕ тата мĕншĕн йĕретĕн?

— Епĕ пĕлетĕпи? Есĕр йĕнине курсан... манăн та йĕрес килсе карĕ. У-у-у!..

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ухливан çар комиссариатне те уласах кĕрсе карĕ.

— Ма йĕрен?—тесе ыйтаççĕ комиссариатрисем.

— Салтака кайатăп. Илетĕри?

— Топровољнă-и?

— Топровољнă.

— Хăш çулта, хăш уйăхра çуралнă ес?

— Çулне калăп та, уйăхне калама пултараймастăп.

— Мĕншĕн?

— Хут пĕлместĕп.

— Хут пĕлменнисене салтакра вĕрентеççĕ. Унтан хăрамалли çук. Пит лайăх вĕрентеççĕ.

— Салтакра та-и?

Ниçта та хут вĕренессинҫен хăтăлмалли çук. Кутамка ăшне пытанас—кутамкине йăтса кайаканни пулмĕ. Йăтаканни тупăнĕ хăй... пĕрпĕр уҫҫитлĕ тупĕ те, килне йăтса кайĕ, килĕнҫе сана кутамкаран туртса кăларса, вăйпах хут вĕрентме тытăнĕ... Вĕренесех пулаĭ вара Ухливанăн!

## VI

Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман! Сĕм вăрман пайан лăпах, кашламасĭ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн ăшĕнҫе хут вĕренесрен тарса çӳрекен теçерттира пытарнă. Мăн йуман хăвăлĕ ăшĕнҫе ерешмен пек хутланса лараĭ теçерттирĕ. Пилĕк çăкăр ҫикнĕ кутамки Ухливан аллинҫе хăйне мĕншĕн кунта илсе килни çинҫен пĕлесшĕн, пĕр хускалмасăрах шухăша кайса лараĭ.

— Кĕрст!—тутарҫĕç çывăхрах кашкăр вырăнне çăхан тытакан ухатниксем... пăшалпа.

— Кĕрст!—пуçне хăвăл маҫҫи çине перĕнтерсе сиксе тăҫĕ Ухливан.

Кăшкăраĭ:

— Хурах, хурах! Пăшалпа персех хут вĕрентеççĕ!.. Хурах, хурах! Çăлăрах! Хут вĕрентеççĕ! Пĕтетĕп!

Йумахри арçури сасси тейĕн вăрмана çурса кайакан Ухливан сассине.

— Хурах! Хурах! Çăлăрах!

VII

Пит киҫем мăн ҫын хурах кăшкăрни. Калама ҫук киҫем. Киҫемрен ĕнтĕ, «хурах»! тенĕ сасса илтсессĕн, Ухливанăн тула тухса кайнă арăмĕ пӳрте ҫупса кĕнĕ, кӳршĕсем пуртă-сенкĕсем йăтса пынă.

— Хурах!.. Хурах!.. — тесе кăшкăрса выртнă Ухливанĕ тӳшек ҫинҫе.

— Мĕн пулнă?

— Тĕлĕк курнă.

Кунта каланисене пĕтĕмпех Ухливан тĕлĕкре курнă. Ах, мур! Епĕр ҫăн тесе! Хут вĕренме кайас килмен унăн, ҫавăнпа ҫак тĕлĕкпе аташса выртнă.

Тĕлĕк курни усăллă пулнă. Халĕ вăл хаваслансах хут вĕренме карĕ. Тепĕр ирҫҫен арăмне кĕнеке хутаҫҫи ҫĕлеме хушнă. Тăрăшсах вĕренесшĕн. Вĕренсе тухсан „Капкăн“ ҫырăнса илме шухăшлаť. Маттур!..

1929-мĕш ҫул.

## Трактăр ҫурти.

Усен-пулансем ҫуратса пама хатĕрленекен ҫĕр пайан уйав тăваť—пољшевикла ҫуракин пысăк ĕҫĕсем пуҫланса кайнă пайан унăн мăнтăр пиҫĕ ҫинҫе.

Пĕҫҫен хуҫалăхлисен анисене ватă кукамай пек кукăр сухапуҫ йерипен йĕрлесе пыраť, колколхоҫнĕксен уй тăршшипех тăсăлакан мăн „анине“ кӳлмесĕрех кӳлĕннĕ трактăр кăпăшлантарса пыраť.

* * *

Хĕвел кăнтăрлана ҫитет. Сасартăк инкек пулнă уйра. Трактăр, ҫипер ĕҫленĕ ҫĕртех, ҫăхăмлама пуҫланă. Ҫыннисем трактăр тавра кускаласа

кăна тăраççĕ. Пĕри, астăвайманнипе, „ну!“ тесе те пăхрĕ трактăра, анҫах хурçă лаша „ну!“ тенине илтмерĕ, вырăнтан та тапранмарĕ. Аптраса çитнĕ „трактăрисĕ“. Вăрçаççĕ трактăриса та, унăн „помошнĕкне“ те трактăрис вырăнҫе ĕçлеме пултарайманшăн пăскăртаççĕ. Трактăриса:

— Кам хăйамаҫĕ ҫирлеме хушнă ăна хĕрсе ĕçлемелли вăхăтра,—тет трактăр урапisem çине пăхса пĕр хура сухал.

— Çынни вилес пек ҫирленĕ. Ним пĕлми выртат̆, есĕ ăна вăрçатăн,—терĕ хирĕç çĕтĕк кĕске пиншакли.

— Унтри кунти-тыр кунти! Тфу санпала! Трактăр тытса пыма пĕлетĕп тесе мухтанатăн. Ху лартăн та, пĕрер тавлăк та сухалаймарăн,—трактăр ҫарăнса ларҫĕ тесе вăрçаççĕ трактăрисăн „помошнĕкне“.

Мĕнле калас—помошнĕк тес—помошнĕкех мар та ĕнтĕ вăл Унтри. Трактăрпа ĕçлеме пултарассăн туйăннă та ăна, трактăрис вырàнҫе ĕçлеме тыттăннă.

— Мĕншĕн ĕçлейми пулҫĕши ку трактăр? Тĕлĕнмелле!

— Ат̆ăр пурте шырама. Трактăр йусама пултаракан тупма.

— Авă пĕри çулпа кайат̆. Паҫттолăскер. Вĕреннĕ çын пулмалла,—вăл пĕлет ĕнтĕ. Çавăнтан ыйтса пăхас. Ей, килха!

Çынни лашине тăратса хайхисем патне пырса тăрат̆.

— Мĕн кирлĕ?

— Çак трактăр пирĕн мĕншĕн ĕçлейми пулнă? Каласа парха тархасшăн.

— Калама пултараймастăп.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен пĕлместĕп.

— Ма пĕлместĕн? Есĕ нумай вĕреннĕ ҫынни кусăнтанах паллă. Миҫе ҫул вĕреннĕха?

— Вуникĕ ҫул.

— Вуникĕ ҫул вĕренсе те трактăр мĕншĕн ĕҫлеме ҕараннине пĕлместĕни?

— Кайах апла пулсан ху кайма тухнă ҫĕре. Ҫулу такăр пултăр.

— Уҕиттĕл патне ҕупас. Вăл ăслă ҫын. Каласа парĕ.

Ҕупаҫҫĕ. Кĕреҫҫĕ шкула. Уҕитли килте ҫук. Килĕрен шыраса ҫӳреҫҫĕ.

— Сирĕн патра уҕиттĕл ҫуки?

— Ҫук. Хаљ анҕах урампа иртсе карĕ.

— Ăҫталла?

— Тăвалла.

— Ҕупатпăр.

— Уҕиттĕл ҫуки?

— Мĕнле уҕиттĕл?

— Аҕасене хут вĕрентекенни.

— Килмен вăл пирĕн пата.

— Е-ей-й! Ей, ĕмĕлке! Ан кайха. Килха кунта! Есĕ...мĕн... леш уҕиттĕл ăҫтине пĕлместĕни?

— Ме-ме-мек!...

— Ĭфу, шуйттан! Каҕака таки мĕн...

— Тăхлаҕă, тăхлаҕă! Килха кунта. Уҕиттĕле курмани есĕ?

— Курмарăм.

— Суйатăн. Суйни куҫăнтанах паллă.

Виҫ-тăватă ҫын таҫтан сĕтĕрсе пыҕĕҫ уҕиттĕле.

— Кала—мĕншĕн пирĕн трактăр ĕçлеми пулнă?
— Епĕ пĕлетĕпи!
— Ăна та пĕлместĕн пулсан мĕне вĕрентнĕ вара сире пысăк шкулта?
— Аҕасене вĕрентме вĕрентнĕ!
— Мĕне вĕрентме?
— Çырма, вулама, арифметтĕккăна...
— Трактăр çинҕен вĕрентме вĕрентмени сире?
— Ĭфу, санпала! Уҕитлӳ-каҕку!

Авă, пĕр çынна йăтса килеççĕ. Трактăр ĕçне пĕлекенскер пулмалла. Ей, хăвăртрах йăтса килĕр!

—Ҕиҕҕас!

— Трактăр мĕншĕн ĕçлеменнине пĕлекен çынна тупрăмăр. Пĕлетĕп, тет. Ĕçсе тултарнă та сысна пек сарăлса выртнă навус купи кутне.

— Ну, калаха ĕнтĕ—пирĕн трактăр мĕншĕн ĕçлеми пулнă? Пĕлетни?

— Пĕлетĕп...
— Ну, кала еппин!
— Мм-мĕншĕн ĕçлейми пулнине-и? Хупнăран.
— Мĕне хупнăран?
— Ара, ххxупнăсскер ăçтан ĕççслетĕр.
— Кам хупнă?
— Милитсисем хупнă пуҕ?
— Мĕне?
— Трактире.
— Ĭфу!.. Мĕн тума илсе килнĕ ку ӳсĕр çынна.
— Вулав çуртне кайатпăр та, трактăр çинҕен калакан кĕнеке илсе килетпĕр, теççĕ хăшĕ пĕрисем.

Йуланутпа ҕупрĕç вулав çуртне иккĕн васкаса. 6 çухрăм каймалла.

— Ма иккĕн кайатăр?

— Ара, вулав çуртăн пуçлăхне шырамалла пулсан...

— Иккĕн иккĕнех ĕнтĕ—кĕнекине тупаймасан та, хуплашкине те пулин тупса килетпĕрех. Пĕҫҫен пек мар,—тет кайакансенҫен пĕри кулса.

— Кĕнекине тупмасăр ан килĕр!

Кусем тухса кайсан, трактăрис „помошнĕкне" илсе пĕр иккĕн-виççĕн пуҫнитсăна ҫупрĕç—ҫирленĕ трактăриспа калаçса пăхма.

— Вилмениха?

— Вилменха. Халĕ ҫирĕ кăштах лăпланҫĕ пулмалла.

— Тăхтăрха еппин вăраниҫҫен.

Трактăрис вăранҫĕ. Куçне уçрĕ.

— Калаçмалли пурҫĕ-и?—ыйтрĕ вĕсенҫен.

— Пурҫҫĕ çав.

Пынă çынсем инкек çинҫен каласа параççĕ.

— Унтри! Тупаймарăни мĕн трактăр айăпне, тесе ыйтатĕ трактăрис хăйĕн помошнĕкĕнҫен.

— Винти-мĕнĕсем машшинăн пурте хăй вырăнҫех лараççĕ,—тет Унтри татăклăн. Нимĕн те пăсăлман. Трактăрĕ çапах ĕçлеймест. Мĕншĕнне пĕлеймерĕм.

— Трактăрăн çурта пур, çав çуртан правулккисене тытса пăхрăни?

— Çук.

— Апла пулсан çапла пулнă вăл: трактăрăн пенçина çунтаракан çурта пур, терĕмĕрха. Çуртин шалти вĕçĕнҫе икĕ правулкка пур. Пĕрехмайах ĕçленĕ пирки, çак правулкка вĕçĕсем хăрăмланса ларса çутатма пăрахаççĕ. Çав хăрăма çĕçĕ вĕçĕпе

хырса пăрахсассăн зара çурта çунма пуçлаҭ те, трактăр ĕçлеме тытăнаҭ.

Унтри тĕлĕнсе хытсах карĕ.

— Вăл правулкка тасатма кирли çинђен пĕлмен те епĕ, тет айăплă çын пек трактăрис çине пăхма хăйман куçĕсене краваҭ çинелле йарса.

— Тата калам: çав икĕ правулкка вĕçĕсем пĕринђен пĕри айакра тăраççĕ пулсассăн та, трактăр çурти ĕçлеме пăрахаҭ. Ун пек ђухне правулккисене патнерех пĕрлештеретĕн те, ĕçĕ те пулса тăраҭ.

— Пĕлмен епĕ ăна...

— Пĕлменни хуплаҭ çав.

Васкаса ђупрĕç уйа трактăр патне. Пăхаççĕ— трактăр çурти правулкки вĕçĕсем ђăнах та хăрăмланса ларнă. Тасатрĕç те ăна, трактăр карлаттара пуçларĕ вара.

— Ҭфу!—терĕç пĕрисем.

— Ҭфу!—терĕç теприсем.

— Ҭфу!—терĕç пурте пĕр харăс.

— Ҭфу!..

*
* *

Ак хаљхи Сталин йулташ технĕккăна вĕренме хушни колхоçнĕксен пуçнех пырса тивнĕ. Технĕккăна вĕренмелле çав. Пурин те вĕренмелле! Унсăрăн май килмĕ, йуратнă краштăнсем, май килмĕ!

1931-мĕш çул.

## Аҫа ҫуралнӑ каҫ.

Советла йумах.

Аҫа ҫуралнӑ Пӳрократӑн. Хӑйӗн хут пӗлменлӗхне тӗп тума ӗлкӗреймен аҫа.

Арӑмӗ патӗнҫе кускалама вунпилӗк тенкӗ парса тытнӑ кушшеркки ҫав ӗмӗрте сахал пулакан савӑнӑҫлӑ хыпара калама хӑй пӳлӗмӗнҫе аҫа пек ним шухӑшсӑр ҫывӑракан Пӳрократ патне кӗнӗ васкаса. Вӑранасшӑн пулман Пӳрократ. Хулӗнҫен темиҫе минут хушши тытса силлесен, вӑраннӑ вара вӑл. Куҫне уҫнӑ.

— Ес харлаттарса выртатӑн. Арӑму пысӑк асаппа аҫа ҫуратса панине пӗлместӗн. Тӑр ӗнтӗ!..

— Мӗн?—тенӗ пӳрократ пуҫне татах ӑшӑ утийал ӑшне ҫиксе.

— Санпа арӑмунтан аҫа ҫуралҫӗ. Аҫин куҫӗсем, сӑмсисем, тутисем санӑн пекех, ҫийӗнҫен тата ывӑл. Куҫлӑх тӑхӑнтарсан каснӑ-лартнӑ есех пулатӑн. Ҫитӗ ӗнтӗ ҫывӑрма. Аҭа хӑвӑртрах тепӗр пӳлӗме аҫуна курма!

— Ыран кил! Ыран! Пайан ман вӑхӑт ҫук,— тенӗ Пӳрократ тепӗр айӑкки ҫине ҫавӑрӑнса выртса.

— Мӗнле ыран?—тенӗ аллисемпе ҫунатланса ватӑ кушшерккӑ.

— Халӗ саҫҫетани пуҫланмалла! Вӑхӑт ҫук! Ыран кил!—сасӑ панӑ сӑмса айӗн Пӳрократ.

— Ай-уй, санпала! Ҭфу! Арӑму ыйтаҭ пыма. Епӗ мар.

— Хм! Ыйтаҭ пулсан, сайавлени ҫырса патӑр.

— Мӗнле сайавлени вара?

— Мӗнле сайавлени пулаҭ. Хӑйне мӗн кирли ҫинҫен ҫыртӑр. Ҫапла, ҫапла,—тетӗр,—санӑн аҫа

çуралҫĕ. Аҫу ывăл пулҫĕ. Ывăлна курмашкăн васкасах пыма пĕтĕм ҫĕререн тархаслатăп, тесе çырса ал пустăр. Хăйĕн атрĕсне те кăтарттăр,—тенĕ.

Пӳрократа сăмахпа каласа çĕнтерес çуккине аса илсе, кушшерккă урăх тавлашса тăрас темен. Пӳрократăн хăйпе пĕрле тӳшек çинҫе выртакан портфĕлĕнҫен хут татăкки тупса илсе, çийĕнҫех вăл сайавлени пекки çырса арăмĕшĕн ал пусса панă.

Пӳрократ ăшă утийал ăшĕнҫен çур ӳтне кăларса хута илнĕ те, мĕн çырнине пăхса тухнă.

— Икĕ çĕрте сапеттой хăварнă. Йышăнмастăп ку хута,—тенĕ.

Сапеттойĕсене лартса парсан, Пӳрократ хута илнĕ те, çӳлти кĕтесси çине „откасаť" тесе çырса панă.

— Мăшкăл, мăшкăл. Мĕнле пурăнаť санпа арăму.

Тем тĕрлĕ сăмахсем каласа намăслантарса илнĕ Пӳрократа вара тарăхса çитнĕ кушшерккă.

Ҫылайҫҫен тавлашса тăрсан, ирĕксĕрех вара Пӳрократăн малтан „откасаť" тенине хуратса „утовлетворит" тесе çырса памалла пулнă. Ресолҫутсиллĕ хутне вара кушшерккăна тыттарнă.

— Тĕнҫери лару-тăру йăвăрланнă вăхăтра манăн ывăл аҫа çурални клас тăшманĕсене хурлантараť, мана хама савăнтараť. Ҫавăнпа хамăн аҫана хамăн пирвайхи самеçтиттĕл тăвасси çинҫен кĕçĕрех приккас парап,—тенĕ вăл йулашкинҫен савăнса.

Унтан сĕтел çинҫе выртакан портфĕлне çаклатса, арăмĕ пӳлĕмне токлатсăрах кĕрсе кайнă.

Кĕрсессĕнех краваť çинҫе шĕвелме пуçланă хĕрлĕ ҫернил тĕслĕ аҫа амăшĕн кăкрине ĕмсе выртнине курах кайнă. Ҫиленнĕ Пӳрократ:

— Кам расрешшени панӑ сана манӑн арӑмӑн кӑкрине ӗмме?—тесе хӑратса тӑкнӑ аҫана.

Аҫи ҫӗнмен.

— Анкеттӑ та тултарман пуҫха есӗ! Кала?.. Йату мӗнле сан? Хушамату мӗнле? Аҫу-аннӳ кам? Вырӑси, ҫӑваши? Миҫе ҫулта халӗ есӗ?

Аҫа, ҫывӑрса кайнӑскер, нимӗн те ҫӗнмен.

— 1905-мӗш ҫулхи револҫутсиҫҫен мӗн ӗҫпе пурӑнтӑн?

Амӑшӗ нӑш-нӑш туса выртнӑ. Кушшерккипе аҫи ним сасҫӗв те кӑларман.

— Шур квартире пулмани есӗ? Йут патшалӑха тарнӑ хурӑнташусем ҫуки санӑн?

Каллех сасҫӗв ҫук.

— Мӗн ҫӗнместӗн ҫак есӗ? Ҫывӑратӑн пуҫха! Клас тӑшманӗ вӑраннӑ вӑхӑтра ҫывӑрма йурамасть! Пӗҫӗкҫӗскер пӗлместӗн те пулӗ есӗ ун ҫинҫен. Пӗлместӗн пулсан, ыранах ҫирккуҫар йарса пӗлтерем.

Ҫирккуҫар тенине илтсен аҫи у-а, у-а, у-а!,. тесе кӑшкӑрма тытӑннӑ. Уа-уа-уа!—тенине илтсен тинкеререх пӑхнӑ та аҫи ҫине Пӳрократ, портфӗлне пӑрахах йанӑ.

— Ай-уй! Ытла та пӗҫӗкҫӗҫке ку аҫа! Аллисем те пӗҫӗк, урисем те пӗҫӗк, сӑмси те пӗҫӗк. Ман мар ку аҫа. Мӑн пулсан пысӑк пулмалла. Епӗ хам та пысӑк ҫын.

Унтан кушшерккӑ хӑлхи патне пырса ыйтнӑ:

— Вӑл ҫӑн-ҫӑнах ман аҫа иккенне ӗнентерекен утостоверени пури унӑн?—тенӗ.

Кӑна илтсен, нӑшлатса выртакан арӑмӗ уласах йӗме пуҫланӑ.

— Ма йӗрен?—тенӗ хыттӑн Пӳрократ.—Йӗрес кампани ҫитмен халӗ. Выкӑвӑр парасса кӗтетӗни мӗн?

Тапранса кайнӑ ҫакӑн хыҫҫӑн харкашу. Арӑмӗ у-у-у, тенӗ, аҫи уа-уа-уа, тенӗ, упӑшки ыран йӗрӗр,—пайан ман канмалли кун, краваҭ ҫине вырт-малла,—тенӗ.

— Кай тухса! Сана каҫҫа тухнӑ куна ылханатӑп, ылханатӑп! У-у-у!

— Ухмах! Пурӑнайрӑнши мансӑр? Пӗҫҫен пурнӑҫ ваҫҫи сметтӑ туса хутӑни? Тефитситне мӗнле тултарӑн?

— Алимент тӳлӗн!

— Алимент ҫметтине мансӑр утвертит тумаҫҫӗ. Комиҫҫире мӗн калӗҫха унта! Клас тӑшманӗ ес!

— Мӗн кирлӗ мара каласа вӑрҫатӑн!..

— Тӗттӗм хӗрарӑм есӗ! Тӗттӗмлӗхпе кӗрешмелле!—тесе Пӳрократ краваҭ ҫинҫе ахлатса выртакан арӑмне ик аллипех силлеме тытӑнаҭ хайаррӑн.

Упӑшки ҫав тери ҫил-тӑвӑл кӑларнине тӳсеймесӗр, ҫирлӗ арӑмӗн ҫӗри, Пӳрократ ресоҫутсийӗсӗрех, ҫурӑлса кайнӑ. Куҫӗсем хупӑннӑ, аллиурисем ҫӗрелле усӑннӑ, тутисем у-у у!—теми пулнӑ, сывлӑшӗ вӗҫсе кайнӑ.

— В и л ҫ ӗ!—тенӗ Пӳрократ хуйхӑрса.—Есӗ вилтӗн, анҫах сан ӗҫусем ҫӗрӗ,—тенӗ аҫи ҫинелле кӑтартса.—Акт ҫырас пулаҭ. А к т ҫырмасан ку пурлӑха манран шырама пултараҫҫӗ. Ҫисткӑ вӑхӑтӗнҫе растратҫӗк йатне илтесси, тенӗ те кушшерккине местком патне ҫуптарнӑ...

Тепӗр виҫӗ кунтан Хусана куҫарнӑ ҫав Пӳрократа. Вӑл куҫнӑ ҫӗнӗ уҙрештенин вывӗски ҫинҙе „Психиатрическая лечебница“ тени катаранах паларса тӑрат̆.

Халӗ те вӑл унтах «ӗҫлет»: ресољутсисем ҫырат̆, ҙиркуљарсем кӑларат̆, анҙах хӑйне решуткӑллӑ пӳлӗмрен кӑлармаҫҫӗ тухтӑрсем,—ухмаха йернӗҫке есӗ, тесе тытса тӑраҫҫӗ унта.

Йумахӑм пӗтрӗ, Пӳрократсем пӗтменха, пурха вӗсем кашни уҙрештенире тенӗ пекех.

1929-мӗш ҫул.

## Ҫиҙӗ ҫыру.

Тӗлӗкре курнӑн тӑвас пуљ кунта каланисене. Калӑпӑр, епӗ, алла руҙкӑ тытса, «Капкӑн» ваљљи стат̆йа ҫырса ларнӑ пултӑр. Ҫырса ларнӑ ҫӗртех, куҫсем ҫывӑрса кайнӑ пирки, хам та ҫывӑрса кайнӑ пултӑр Пулӑшкомсемпе ревиҫи комиҫҫисем пек мар, ҙӑн-ҙӑнах ҫывӑрса кайнӑ пултӑр. Калӑпӑр, пыр шӑтӑкӗ харлаттарнӑ пултӑр, сӑмса шӑтӑкӗ ши-ши! шӑхӑрса хӑй кӗввине каланӑ пултӑр. Ҫав пыр шӑтӑкӗ харлаттарнӑ вӑхӑтра, епӗ тӗлӗк курнӑ пултӑр. Тӗлӗкре ретакси йаҙӗпе ҫырусем нумай килнӗ пултӑр. Ҫав нумай ҫырусенҙен ҫийелтисене алла тытса, канверҙӗсене ҙӑрҙар ҫӗтсе, ӑшне ҙикнӗ хуҙӗсене вулама тытӑннӑ пултӑр. Ну тытӑнӑпӑр вулама!

*Пӗрремӗш ҫыру.*

Шупашкарти пӗр комиссариатра ӗҫлекен „ларакан“ тесен те йурат̆) аллине пусса йанӑ

пĕрремĕш çыру çине. Ахаљ çын мар—кăмиссариатра ĕслекен пысăк çын. Çавăнпа унăн çыруне вуласа панă ђухне хăлхана тăратсах итлемелле. Хăлхăрсене тăрататтăр пулсан, вуласа парам:

„Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме кирли çинђен районсене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, райĕçтăвкомсем вăл тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен. Ку йапала райĕçтăвкомсем йенђен питĕ пысăк çитменлĕх пулса тăрат. Халĕ, сотсиалисăм тунă ђухне, тырпула уйра лăйăх пăхса, ăна выљăхсемпе ваттармасăр çитĕнтерни (ӳстерни) кирлĕ“...

Малалла мĕн çырнине вуламасăрах, тепĕр çыру çине куçар.

*Иккĕмĕш çыру.*

Иккĕмĕш çыру райĕçтăвкомран. Вулăпăр:

„Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме кирли çинђен райĕçтăвком хăйĕн йалсовеђĕсене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, йалĕçтăвкомсем вăл тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлеймен. Халĕ сотсиалисăм тунă ђухне, тырпула уйра лайăх пăхса, ăна выљăхсемпе ваттармасăр çитĕнтерни кирлĕ“...

*Виççĕмĕш çыру.*

„Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕ ĕçлеме кирли çинђен, йалĕçтăвком йалхуçалăх çексине кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, йалхуçалăх

çекси вăл тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлеймен. Халĕ, сотсиалисăм тунă ђухне“...

Малаллахи пĕрремĕшпе иккĕмĕш çырури пекех.

*Тăваттăмĕш çыру.*

„Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме кирли çинђен йалхуçалăх çекси йалти ĕççыннисене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, йалти ĕççыннисем вăл тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлеймен. Ку йапала йалти активиссем“...

Малалла вулама та кирлĕ мар.

*Пилĕкĕмĕш çыру.*

Çыру мар. Йал халăхĕн прикăвăрĕ ку.

„Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме кирли çинђен йалти ĕççыннисем йал выљăхĕсене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, йал выљăхĕсем... (Малтанхи сăмахсене 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш çырусенђе вула).

*Улттăмĕш çыру.*

«Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлеме кирли çинђен йал выљăхĕсем йал сурăхĕсене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, сурăхсем...».

*Çиђђĕмĕш çыру.*

«Акса хăварнă ыраш калђисем çине выљăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе вирлĕн

ĕçleme кирли çинђен-сурăхсем хăйсем йенђен уйри мулкађсене кăтартусем çителĕклĕ панă пулин те, уйри мулкађсем (куйансем) вăл тĕлĕшпĕ çителĕклĕ ĕçлеймен. Асăрхаймасăр калђа çине тухса кайнă сурăхсене ватма йураманни çинђен аса илтерес выранне, сасартăк сиксе тухса, сурăхсене хуйхатса уй варнелех хуса йарса пыђĕç. Халĕ сотсиалисăм тунă ђухне»...

*Йулашкинђен калани.*

Мулкађсенђен çыру çук. Çыру çукран мĕн пур айăпа хăйсем çине илни палăрат.

Манăн тĕлĕк пĕтрĕ. Кашни кампанирех ку тĕлĕк пулма пултарат. „Çырусенђи" малтанхи сăмахсем анђах улшăнаççĕ. «Ыраш калђисене выђăхсем йарса ваттарассине ђарас тĕлĕшпе... тейес выранне, сăмахран, „тыра пухса хатĕрлес тĕлĕшпе"... йе „страхховкă пухас тĕлĕшпе"... йе тата урăх кампанийе асăнса „тĕлĕшпе" сăмах хушса çырмалла.

Тĕлĕкре курнăн турăмăр кăна. Епĕр тĕлĕкре курнине пурнăçра туса пăхакансем те пулкаланă, тенине илтрĕмĕр халĕ епĕр. Самокритĕккă тенĕ кайăк тытма йуратат, тет ун пек хăтланакансене. РКИ те, тата ытти оркăнсем те ђасах тытаççĕ, гет. Çавăнпа епĕ кăтартнисене шанђăклă меттăт тесе каламах май килмест, теççĕ сăнаса пăхнисем. Епĕ хам та çавнах шухăшлатăп çав!

1929-мĕш çул.

## Кăшкăру палли.

Иван Петровиҫ аллине руҫкă тытса ҫамка тирĕсене картлантарҫĕ те, умне сарса хунă шур хут ҫине ҫырма пуҫларĕ.

„Хĕрарăмсен кунĕ“ тесе васкамасăр пысăк саспаллисемпе йĕрлесе тухрĕ крахвит тунă хутăн малтанхи йĕрки ҫине.

Унтан „пот поҫккă“ каснă ҫӳҫне пушă аллипе уҫ̆туkласа илҫĕ те, малалла мĕн ҫырасши тесе, ҫернил кĕленҫи ҫине ҫылайтҫен пăхса тăҫĕ.

„Аха!“. Тупрĕ.

— Кашни ҫулах мартăн 8-мĕшĕнҫе епĕр хĕрарăмсен кунне уйавлатпăр. Хĕрарăмсене сотсиалисăм тăвас ĕҫе хутшăнтармалла... Ĕлĕк хĕрарăмсем кăпиталисăм пусмăрĕнҫе те, упăшки пусмăрĕнҫе те“... Малалла мĕн ҫырасси пуҫран вĕҫсе тарнă.

Иван Петровиҫ сиксе тăҫĕ те, пирусне тивертрĕ васкаса, пӳлĕм тăрăх утса ҫӳреме тытăнҫĕ шухăш шырама.

— Шуйттан претҫетаттĕлĕ! Есĕ, тет, профсойус ҫленĕ. Халăх ĕҫне йермелле. Хĕрарăм кунĕ ваҫҫи статйа ҫырса парха, тет. Сан ҫтена хаҫату ҫине ҫырмасăрах, манăн ĕҫсем нумайййне пĕлмест. Хам парттире те тăмастăп, ҫапах ҫыртарат̆...

Каллĕ-маллĕ утса ҫӳресе, ҫӳреҫе патне пырса тăҫĕ. Ҫат!... Ҫат!... Ҫат!... тумла йухат̆ ҫӳреҫе йанаххи ҫинҫен сăрланă урай хăми ҫине.

— Ма ҫӳреҫе ҫинҫи тутăрна пăрмастăн!—тесе ура тапса пыҫĕ тĕпелте аҫа кĕписем ҫуса тăракан арăмĕ патне.

— Йершеймерĕмҫке! Аса илтĕн пулсан, хăвăннах пăрмаллаҫҫĕ—йăвăр ĕҫех мар, терĕ арăмĕ ҫаннипе ҫамки ҫинҫи тарне шăлса илсе.

— Хĕрарăм ĕçне ĕçлеме авланман епĕ,—тесе хăтăрса тăкрĕ Иван Петровиҫ.

Каллех сĕтел умне ларса çырма пуçларĕ:

— „Хĕрарăма ирĕке кăларас тесен, кухҫăран хăтармалла... пĕрлешӳллĕ пурнăçпа пурăнмалла: йаçлĕсем уçмалла, пĕрле апатланмалли столовăйсем уçмалла, унсăрăн“...

Столовой çинҫен аса илнĕрен, апат çийес килсе кайнă Иван Петровиҫăн.

— Мĕн пайан апат çитерместĕн! Кăнтăрла иртни пĕр сехет çитет. Ман канмалли кун тесе, ĕçлемелли кун мар тесе, апат çитересшĕн мариха мана есĕ?—тесе кăшкăрҫĕ арăмне.

Арăмĕ:

— Çитересҫĕ те, пиçеймерĕçке!—терĕ йăвашшăн.—Ара ирхине пуљнитсăна карăм та, кăнтăрла иртсен тин таврăнмалла пулҫĕ,—хăвах пĕлетĕнçке.

— Çийес килет ман, çийес килет!—кăкăрне ҫышса пырат Иван Петровиҫ арăмĕ патне.

— Ытла выçса карăн пулсан столовăйа кайса çи!

— Столовăйне çӳреме авланман епĕ!

Каллех ларҫĕ çырма. Аллине руҫкă тытнăҫҫĕ, алăк сасси илтĕнҫĕ. Пиçмоностсă килнĕ. „Исвеçти“ хаçат, „Краснайа Нивă“ шурнал, тата „Капкăн“ тыттарҫĕ. Тыттарҫĕ те, шухăша карĕ.

— Есĕр „Рапотнĕтсă“ шурнал çырăнса илтĕри çак? Манса карăм. Кунта пĕр номĕр пур, те сирĕнҫҫĕ?—тесе ыйтрĕ пиçмоностсă.

— Пирĕн мар,—тесе ответлерĕ Иван Петровиҫ.

— Çав шурнала çырăнса илмеллеҫҫĕ те, те-

мĕншĕн илсе памастăнçке,—терĕ пиçмоностсă кайсан Иван Петровиҫ арăмĕ.

Иван Петровиҫ нимĕн те ҫĕнмерĕ, сиввĕн çеç пăхса илҫĕ.

„Хĕрарăма çутта кăлармалла“,—çырать малалла Иван Петровиҫ.—„Хаçат-шурналсем вулама вĕрентмелле“...

Тепĕр пӳлĕмре выҫакан 5 çулхипе 3 çулхи аҫи йурлама тытăнҫĕç. „Воспоти помело“!—тесе кăшкăраççĕ—„Воспот помело!...

— Кам вĕрентрĕ сире кун пек йурлама!—алăкне уçса хăтăрса тăкрĕ аҫисене Иван Петровиҫ.

— Кам вĕрентет вĕсене!—сассине парать кухҫăран арăмĕ.—Хамăр килте çук ҫухне ҫас-ҫасах Матронă йулкалать. Çав вĕрентнĕ пуль. Аҫа плошҫаткине йанă пулсан, ун пек йурăсем илтес çукҫĕ те, йамарăн та...

— Аҫасене йаçлĕре усрама авланман епĕ!—терĕ хирĕç Иван Петровиҫ.

Каллех çырать:

„Хĕрарăмсене происвотствăна йертмелле. Хапрăк-савăтсенҫе ĕçлекен хĕрарăмсен проҫҫăнне ӳстермелле“..

Кăна çырнă хыççăн малалла мĕн çырасси çинҫен шухăшланă ҫухне, хăй арăмĕ кĕркунне „Трушĕнĕтсă“ ертеле çĕвĕçе кĕресшĕн пулнине аса илет. Шалуне те лайăх тӳлеҫҫĕç. Йамарĕ ун ҫухне Иван Петровиҫ арăмне çĕвĕçе. Килте кам ĕçлет, терĕ.

— Ҫăнах та, ун ҫухне происвотствăна йанă пулсан халĕ килте кам ĕçлеҫҫĕха ĕнтĕ, тесе шухăшлать Иван Петровҫăн тăнлă пуçĕ халĕ те.

Çырҫĕ, çырҫĕ. Каллех шухăшĕсем сӳрĕлсе

карĕç. Сӳннĕ пирусне тивертрĕ те, каллех каллĕмаллĕ утса, çырмалли шухăшсем пӳлĕм тăрăх шыраса çӳреме тытăнҫĕ. Ним ĕçсĕрех кухҫăна тухса арăмĕ мĕн тунине пăхса тăҫĕ пĕр самантлăха.

— Мĕн ку?—терĕ сĕтел çинҫе выртакан хута курса.

— Повесткă. Ыран сопранийе ҫĕнеççĕ.

— Мĕнле сопранийе?

— Хĕрарăмсен сопранине. Хĕрарăм кунĕ йаҫĕпе пулаť, тет.

— Кайаймастăн ыран.

— Ма?

— Епĕ кинона кайатăп.

— Кинона кайма сопрани пĕтсен те пултаратăн.

— Аҫасене кам пăхаť?—кăшкăрса тăкрĕ хисеплĕ Иван Петровиҫ.

Аха, çырмалли шухăш тупăнҫĕ. Тупăннă шухăшĕсене Иван Петровиҫ каллех хут çине ӳкерме ларҫĕ.

Ĕç малалла карĕ. Çур сехетрен статйа хатĕр те. „Кухҫăран хăтăлнă хĕрарăм сывă пултăр" тенипе пĕтрĕ Иван Петровиҫ статйи. „Сывă пултăр" тенĕ хыççăн кăшкăру палли (!) лартма руҫкине ҫернил кĕленҫи ăшне ҫиксе кăларнăскер çырма тытăн... пери вĕçне шăна вилли (çуллахийех пулмалла) тирĕннĕ те, ҫернилĕ сарăлса карĕ. Кăшкăру палли вырăнне, кулакан пит-куç пек карттин пулса тăҫĕ хут çинҫе.

Ҫернил сарăлса кайнă пирки пулнă пит-куç Иван Петровиҫран кулаť. Епĕр те кулар унтан. Сан пеккисемпе çĕнĕ пурнăç тума май пулмĕ, тейер пурте пĕр харăс.

1931-мĕш çул.

## Виçĕ калав

I

Пĕрремĕш калав ман телейсĕр пулђĕ. Пĕр вулав çуртлă йалти «тĕттĕм» арçынсем Сăпани йатлă краштанккăна пухуран ывăткăнтарса кăларса йани çинђен çырнăђђĕ еп унта. Çырса пĕтертĕм те, йала кайса колхоçнĕксене вуласа патăм. Ђăр пăхрĕç вуласа пĕтернĕ хыççăн колхоçнĕксем ман çийе.

Ма апла пăхнине пĕлеймерĕм. Ыйтрăм. Вара пĕри каларĕ:

— Писсаттĕл йулташ!— терĕ.—Есĕ ку калава Сăпанийе хўтĕлесе çырнă. Краштанккă тенĕ ăна. Апла йурамасђĕ.

— Ма?

— Краштанккă мар вăл. Кулак арăмĕ.

Вот тепе на! Ёнен ес çынна: ђипер çын темелле сăнĕнђен пăхсан. Ђипер пулман. Поткулађнĕк пулнă. Хама çав Сăпани историйĕ çинђен каласа çыртаракан етем çинђен калатăпха. Ах, шуйттан!.. Улталанă мана.

Вара хама-хам сăмах патăм: куçпа курман, лайăххăн пĕлмен йапала çинђен нихăçан та çырмалла ан пултăр, терĕм. Ун пек çырни сылтăм сулăнђăкри шурлăха сĕтĕрсе кайма пултарать!..

Малаллахи калавсенђе хам ђăн-ђăнах пĕлсе тăнă ĕçсем çинђен çырап.

II

Вырăн çинђен ирхи автансемпех тăнă Йăван. Ёнер анђах туса пĕтернĕ çăпатине çеклĕ пăтинђен

илсе пукан умне хуђĕ те, хыткан урине çĕтĕк тăла ђăркама тытăнђĕ. Хăйă çутнăран тулти çанталăк кăмака ани пек тĕттĕм. Ши! шăхăраť, у-у! улаť асса кайнă çил. Кулаксем Совет влаçне хирĕç уласа вĕрнĕнех туйăнаť Йăвана пайанхи кутсăр-пуççăр çил-тăманлă çанталăк.

— Пайан паха кун. Совета çĕнĕ çынсем суйласа лартатпрă. Паха кун тесе паранкă кукли пĕçернĕ пулсан йурĕђђĕ те пайан,—терĕ Йăван салма çăракан арăмĕ йенелле пăхса.

— Вуттине халех хутас тенĕђђĕ те... вара кăштах тăхтамалла пулаť, терĕ арăмĕ ни пĕçерес, ни пĕçерес мар сасăпа.

— Апла пулсан пĕçермесен те йурĕçке. Хăйар шўрпипе те пурăнкалăпăрçке. Тата санăн та каймалла пайан.

— Ăçта?—тĕлĕнсе ыйтрĕ арăмĕ.

— Мĕнле «ăçта»? Пухха каймалла. Совета çынсем суйлама. Ай, пырас теместĕни?

— Мĕн мăшкăлан!

— Мăшкăлани пулаť-и вăл. Кайăпăр. Ађисем ларĕç... питĕрсе илĕпĕр те.

— Мĕн тăвап епĕ хĕрарăм пуççăнах пухха тухса çўреме!..

Вăрçаť пухха ђĕннĕшĕн упăшкине. Вăл вăрçнине кура, хуран айĕнђи вутти те Йăванпа вăрçса ђорт! тесе сикет.

Ăнлантарђĕ, ăнлантарђĕ Йăван мĕншĕн хĕрарăмăн та пухха çўреме кирлине. Нумай ăнлантарђĕ. Ăнлантарсах урине те сырса пĕтерђĕ, питне те сивĕ шывпа çуса хуралма пуçланă алшăллипе шăлса типĕтрĕ, сак çинђе тумтир айне пулнă ђĕлĕмне те шыраса тупса тивретсе йађĕ. Арăмĕ

упăшки каланине ни сылтăм хăлхине, ни сулахай хăлхине ҫикмест. Хăйĕннех перет.

— Турă ан калатăрах пухха тухма. Упăшка пур ҫинҫех пухха тухсан, турри вара кайран йурри упăшкасăр тăратса хăварĕ,—тесе хирĕҫет.

Темĕскер аса килнĕ пек пулҫĕ ҫав вăхăтра Йăвана.

— Ухмах ес!—терĕ ҫиленнĕ пек пулса.—Пайанхи пухура ҫухăн ҫын арăмĕсене парнесем памалла. Есĕ, пымастăп тесе, ҫăкăрашса тăратăн.

— Мĕн параҫҫĕ,—терĕ арăм, шыв патне кайма тесе йăтнă витрине лартса.

— Пĕрер саппунлăх вырăс пирĕ, пĕрер тутăр параҫҫĕ,—терĕ Йăван хăй ҫийелле тухнине сиссе

— Укҫалла пулҫха?

— Тоттă ҫав—укҫалла мар. Пыманнисене памастпăр, терĕ ĕнер йалсовет претҫетаттĕлĕ.

...Ҫак калаҫу хыҫҫăн темиҫе сехетрен, Йăванпа арăмĕ аҫисене тултан ҫăрапа питĕрсе илҫĕҫ те, пĕри малтан, тепĕри кайран пухха тухса утрĕҫ.

Йăванпа арăмĕ пухура мĕн курни, мĕн илтни ҫинҫен каламасан та йурĕха сире, вулакансем!

Ҫылай вăхăт иртсен йалсоветран купи-купипе ҫынсем тухма пуҫларĕҫ. Йăванпа арăмĕ те кăшăлтатса тухрĕҫ. Арăмĕ малта ним ҫĕнмесĕр пырат. Йăванăн пит-куҫĕсем хĕвелсĕрех йăлкăшаҫҫĕ.

Килкарти хапхине уҫма аллине вĕрлĕк хушшине йарсан, ним ҫĕнмесĕр пыракан арăм упăшки ҫине тулти ҫанталăкран та сивĕреххĕн пăхса илҫĕ.

— Мăшкăлассипех сан... арăмунтан. Ăҫта саппунĕ, тутри?

Йăван хăйĕн савнă арăмĕ ҫине ҫу пек ҫемҫен

пăхса, сылтăм аллине унăн хулпуççи çине хуђĕ те, йерипен каларĕ хăйĕн ответне:

— Хађ суйланă советсем лайăх ĕçлесен çĕр ĕçĕ те, хапрăк-савăтсен ĕçĕ те малалла кайсах пырĕ. Вара, ху каланă пек, саппунĕ те, тутри те мана вађђи тапак та пулĕ,—терĕ.

## III

Йентип çывăракан арăмĕ çумĕнђен йерипен тăрса тухса, кăçаттине тăхăнса йађĕ те, хăйă çутмасăрах, пĕр хулхушши йапала пуçтарса йăтса тулаллах тухса карĕ. Сивĕ пирки, вулакансем, епĕр ун хыççăн тухар мар. Тутăр вăл хăй ĕçне. Туса пĕтерсен хăйех пӳрте кĕрĕха. Тулта сивĕ— нăмай тăрас çук.

Ђăнах Йентип тулта нăмай тăмарĕ. Пӳрте хутланса кĕђĕ те, кĕрĕкпе кăççаттине хывса, каллех кĕрсе выртрĕ ăшă арăмĕ çумне.

...Ђылай вăхăт иртсен, çил-тăманлă çанталăк витĕр кăвак çутă килни курăна пуçларĕ. Йентип арăмĕ, упăшкинђен малтанрах тăнăскер, сивĕ урай çийĕн çара уранах темĕскер шыраса çӳрет. Крачçин ламппипех шырать.

Йулашкинђен вырăн çинђи упăшки патне пырса: Йентип, Йентип!—тесе вăратать.

— Мĕн?

— Ман çăпатапа тăла таçта кайнă. Кушак выђаса илсе кайнă пулĕ тесе, шыраман вырăн хăвармарăм. Тупаймарăм.

— Мĕн уншăнах çывăракан çынна тăрататăн ара! Санăн тăлу-çăпатуна епĕ пĕлетĕпи!—терĕ Йентип тепĕр майлă çаврăнса выртса.

Ђӑнах та, арӑмӗ хӑйӗн тӑли-ҫӑпатине ӑҫта хунине ӑҫтан пӗлтӗр ӗнтӗ упӑшки.

Ай-уй! Пиҫиххи те ҫук тем?!

Упӑшки кӑҫаттине тӑхӑнса йанӑскер, арӑм тула тухма хӑйӗн кӗрӗкне шыраҭ. Кӗрӗкӗ те, тӑлиҫӑпати пекех, ҫӑва тӗпне кайса ҫӗтнӗ.

— Йентип, Йентип! Вӑрӑ пулнӑ кӗҫӗр пирӗн пӳртре.

— Мӗн сӳпӗлтетсе ҫӳретӗн ара есӗ!

— Тупа та вӑрӑсем пулнӑ. Кӗрӗк илсе кайнӑ.

Ку хыпар Йентипе те вырӑн ҫинђен тӑратаҭ.

— Манне илсе каймани?

Ҫук, Йентипӗнне илсе кайман. Унӑн тумтирӗсем хӑй вырӑнђех ҫакӑнса тӑраҫҫӗ, тӑли-ҫӑпати те, ђӗлӗмӗ те ӑҫта хунӑ, ҫавӑнтах выртаҭ.

Арӑм кускаласа ҫеҫ ҫӳрет. Куҫ-пуҫсем ҫуталса кайнӑ.

— Хулӑн тутӑра ҫакӑнта, тур кӗтессине, пуҫтарса хунӑђђӗ. Вӑл та ҫук.

— Алӑкне ҫаклатма маннӑ,—тет арӑмне айӑплас шухӑшпа Йентип.

Ҫук йапалана кӑнтӑрла хунарпа шырасан та тупайрас ҫук ӗнтӗ.

Ҫухалнӑ йапаласем тупӑнас шанђӑк сӳнсех ларнӑ хыҫҫӑн, кун ҫути ђӗрӗлле пуҫларӗ.

— Ай, пайан пухха каймаллађђӗ! Мӗн тӑхӑнса кайас ӗнтӗ. Каймасан лайӑх мар,—тесе ик аллине шарт ҫапсах хуйхӑраҭ арӑм.

— Тумтирсӗр каймалли ҫук ӗнтӗ пухха, тет ни каласла, ни калас марла упӑшкийӗ.

— Ай, каймаллађђӗ! Пухха тухмасан етем хисепне кӗмен пек. Ҫийӗнђен тата... совет ђленӗ

тума палăртса хунăҙҙĕ мана. Ай, йалкулли! Мĕн тăвасах?

Пăрça пек куççÿлсем анаççĕ çамрăклăхне çухатман икĕ пиҙĕ тăрăх.

Çĕлĕкне пĕррех пăрахрĕ пухуран таврăннă хыççăн Йентип.

Шуйттан матки!

— Епĕ матки пулсан, есĕ шуйттанĕ пулатăн,— терĕ арăмĕ шÿт туса упăшки çиллине пусарас шухăшпа.—Мĕн пулнă?

— Мĕн тăрăхлан! Ак пуслăх илсе кĕрсен... таккойски парам. Йалсовет ҙленĕ тесе уйăрса тăмăп.

— Мана йалсовет ҙленĕ тунă-и?

Арăмĕ пиҙĕ çине савăнăç мĕлки ÿкрĕ. Ҙăнах та ăна пайан йалсовет ҙленĕ туса хунă. Упăшки уншăн тутине мăрт тунă та... мăрт тунă пулин те, ниҙҙево, иртсе кайаканха!

Ҙĕлĕмне туртса йарсан, Йентип тула тухса кайаť. Кĕпе вĕççĕнех тухса çÿреме хăраман арăмĕ Йентипĕн мăн кăçаттине тăхăннă урисене сĕтĕрсе, хыççăн ҙăхсене апат пама тухаť. Пăхаť—упăшки хĕсĕк ампар айĕнҙен упаленсе тухрĕ. Хăрах аллипе арăмĕн кĕрĕкĕпе тутрине çавăрса тытнă... Арăм:

— Ай-уй, Йентип. Намăссăр! Есĕ пытарнă тем ман кĕрĕке!—тесе кÿршĕсем илтмеллех кăшкăраť. Унтан, кăштах шухăшласан çилленмелли çинҙех кулса йараť:

— Пухха ан кайтăр терĕни?—тет.

Йентип çăварне «тип» шыв хыпнă. Арăмĕ çине пăхмасăр, тÿррĕн утса кĕрсе кайрĕ пÿрте. Вăл хампар айĕнҙен йăтса тухнă çĕклемре арăмĕн кăп-

тăркка кĕрĕкĕ те, çăпатипе тăли те, хулăн тутри те, піçиххийĕ те—çухалнă йапаласем пурте пулнă имĕш!

Савнă арăмне суйлав пуххине кайма ђарас тесе пытарса хунă ĕнтĕ Йентип арăмĕн тăхăнса тухмалли йапаласене.

Хуйхă Йентипе! Арăмĕ унăн, упăшкине кĕçĕне хăварса асла тухнă, йалканаш ђленĕ йатне илтнĕ. Хĕрхенсемĕр ĕнтĕ, телейлĕ краштăнсем, çав телейсĕр Йентипе!

1930-мĕш çул.

## Тухтăр мунђа кĕни.

Тухтăр Иванов, кăнтăрлахи апат хыççăн, хăйĕн ерне çурă çуман ўтне çуса тасатас тесе, мунђана кайнă. Кĕпе-йĕмĕсене йăпăр-йапăр хăвса пăрахса, аллине тас тытса, хăйĕн çине тăрăхла пăхкаласа илсе, шыв катки патнелле утнă. Çав вăхăтра такам тарланă ђўређерен шак-шак-шак тутарнă.

Ним тума аптранипе тухтăр алăк патнелле çавăрăнса тăрса ђўређе йеннелле пуçне çаврса пăхнă. Çав вăхăтрах ђўређерен шаккакан çыннин пиђĕ те кинематтокрăфри пек курăнса кайнă. 40—45 çулхи арăм пулнă вăл. Кхм, кхм! ўсĕркелесе, саттин тутăрне йусакаласа, арăм ыйтнă ђўређерен:

— Тухтăр кунта-и?.. Е-е, кунта тем! Сан патна килнĕђђĕ те... йышăнма пултарăнши? Еп пĕђђенех...

— Мунђара-и? Мунђара йышăнмастăп. Курмастăни мĕн, хаљ çăвăнатăп?

— Курасси... кунтанах курӑнмастӑха. Мӗн тӑвӑп епӗ ӑна курнипе. Мунҫа кӗретӗн еппин? Апла пулсан тӑхтамха

— Ӑ-ӑх! Хӑйамат! Мунҫа кӗме килнӗ. Килте мунҫа тӑвасси ҫинҫен шухӑшламаҫҫӗ. Ӑфу!..

Ӑфуне ӑфу та-ха. Ҫӑвӑнассине ҫӑвӑнасах пулаӑ. Ҫӑвӑнма ирӗк пултӑр тесе, хура кӗпине ҫаннисенҫен карӑнтарса, ҫаршав пекки тӑваӑ, унтан тас ӑшне шыв йама тытӑнаӑ...

Воспоти, каллех сасӑсем...

Тепӗр арҫын, тухтӑр мунҫаран тухассине кӗтме килнӗ.

Иванов тухтӑр ҫӑвӑнаӑ, васкасах ҫӑвӑнаӑ. Пуҫне ҫӑваӑ, урине ҫӑваӑ, хыҫалтине ҫӑваӑ, план йӗрки ҫук вара вӑл ҫӑвӑннинҫе.

Ҫӗнӗрен сасӑсем тухаҫҫӗ.

— Тухтӑрӗ мунҫа кӗретха. Пушӑ мар хаљ.

— Мунҫа кӗрет пулсан, арӑмне каласа хӑвараси мӗн. Арӑмӗ пулӗха унӑн?

— Ыйтман.

«Ыйтман» текенни (малтан пынӑ арӑм) ҫӳреҫе умне пырса тӑрса тӳрех ыйтаӑ:

— Авланнӑ-и ҫак есӗ, тухтӑр?

— Ӑфу! Мӗн сана еп авланнипе! Мунҫа кӗрес терӗни манпа. Ҫук, пулаймарӗ пуљ. Такҫанах авланнӑ. Хӗрӗх те пӗр аҫам пур, ҫитмӗл те пӗр арӑмӑм пур...

Ҫиленнӗ тухтӑр. Ҫилленнипех ҫӑвӑнаӑ. Есӗр те, вулакансем, ҫӑвӑнӑр ҫавӑн пек. Кашни ернерех ҫӑвӑнӑр. Супӑнне ан шеллӗр! Тухтӑр та шеллемест,— ав мӗнле кӑпӑк кӑларса тултарнӑ вӑл.

* * *

Мунђа умне, тухтăр мунђаран тухассине кĕтсе, татах темиçе çын пырса тăнă. Хăшĕ ђĕлĕм туртса тăнă, хăшĕ хыçкаланса тăнă (кĕçĕллисем пулмалла). Тата тепĕр мăшăр хĕрпе кађђă, арăмĕпе упăшки майлăскерсем, пĕрпĕрне «шуйттан» тесе хисеплесе тăнă.

Ђĕрик! тутарнă мунђа алăкĕ. Сакăр-тăхăр çын трук мунђа умне ђерет тăрса кайнă.

— Кам унта?—ыйтнă тухтăр шалтан.

— Епĕ! Манра ђерет. Ман малтан кĕмелле,—çуйăхса тăнă хайхи малтан пынă матка.

— Халĕ кĕртместпĕр,—тенĕ тухтăр йăвашшăн.— Саниттарсем те çăвăнмантаха...

Ђеретрисем шăп пулнă. Шăп пулнă хыççăн пилĕк минутран тухтăрĕ те тухнă мунђа çенĕкĕнђен. Малтан пынă арăм, ђеретре те малти вырăна йышăннăскер, тухтăр çаннинђен йарса тытса:

— Киле илсе кайасђĕ ман сана! Ађам-пăђамсем ђирлĕ. Ĕнер шыв патне карăм та, Пракух арăмне куртăм...

— Ђир? Мĕнле ђир?—тĕлĕнет тухтăр.—А епĕ есĕр мунђа кĕме килнĕ тесе. Хм!.. Есĕр те прийомах килни вара?—ыйтнă ыттисенђен.

Пурте прийома килнĕ. Пĕрин пуçĕ ыратнă, теприн шĕпĕнне касмалла, виççĕмĕшĕнне шăл йусамалла, тăваттăмĕшĕнне... тата хăйаматне...

—Вĕри-çĕлен йерђĕ мана, тенĕ тăхăрмăшĕ.—Хĕр пулса пырат. Алимент тӳлемелле пуласран хăратăп.

Малтан килнĕ арăм каллех çерçи пек ђĕвĕлтетме тытăнат:

— Пĕçертсе пăрахрĕçке ађасене! Çăпан сырăн-

са илҫĕ. Йунлă сураҫҫĕ. Аллисем йухаҫҫĕ. Урисем хуҫăлнă. Сăмсисем кукăрлнă.

Шартах ҫапаť тухтăр аллисене.

— Пури вара ун пек ҫир тĕнҫере?

— Пур, пур,—тет арăм.—Тупа та пур. Епĕр пыриҫҫен вилсе каймасан йурĕҫҫĕ...

— Сире пăхаймастăп,—терĕ вара тухтăр ыттисем ҫинелле пăхса.—Ма есĕр ирхи прийома килмерĕр? Ку арăм патне каймалла. Каймасан йурамасť. Хăйаматла епитеми ҫаклан..,

— Кайăпăр, тухтăр! Ман лаши машшин пек... ҫиҫ ҫухрăма ҫасах ҫитерет.

---

Пылҫăкĕ пиҫнĕ йĕкерҫĕ пек пулса ларнă ҫулпала хайхи «машшин пек» пыракан сутанасăр лашапа лепĕслеттерсе ҫитнĕ аран тухтăрпа инке ҫав ҫиҫ ҫухрăма.

Тĕлĕнмелле ҫирпе ҫирленĕ аҫасем кăсем пынă вăхăтра килте пулман тата.

— Кӳршĕре пулĕха,—тенĕ кулкаласа арăм.— Малтан хама пăхсан та йураť. Пĕр пекех пирĕн ҫирсем. Саланам еппин, тухтăр?

Арăм саланаť. Аллисене кăтартаť, хуллисене, пĕҫҫисене...

— Таҫтан йерҫĕ ку кĕҫĕ? Хама та, аҫам-пăҫамсене те сырăнса илҫĕ. Те Йăван арăмĕ йертрĕ. Сурсах вăрҫатăниха мана есĕ, тухтăр?

— Ма?

— Еп айăплă...

Ҫав вăхăтра маткан аҫисем те пиллĕкĕн пырса тăнă ҫатăлтатса.

Кĕҫĕ кăна вĕсен. Ал-урисем тĕрĕс-тĕкел, ни

йухмаççĕ, ни аманман. Сăмсисем те кукăрлма шутламан. Кĕсен-çăпансем те, çук пирки, куçа палăрман.

— Ма суйрăн?—ыйтнă тухтăр хыттăн, пуçне ђикнĕ маткаран.

— Каçар, тухтăр, айăплă!—йăлăннă арăм.—Пĕлмен пирки пулђĕ. Пуљнитсана илсе пырсан, çынсем сисесрен хăрарăм. Кĕçĕллисенђен мăшкăлаççĕçке пирĕн. Ăсатса йарăпçке лашапах.

Нимĕн те ђĕнмен тухтăр маткана хирĕç. Кар тусне илнĕ те, вăр-вар тухса вĕçнĕ васкаса матка килĕнђен. Хапха алăк ђĕриклетнĕ.

Мунђа, куљттурă револ̆ютси, профсойус, краштăн ђĕри сисĕмĕ,—пурте тухтăр пуçĕнђе йăшăлтатса тăрса, ăшри (сулахай йенђи) ђĕрине хускатнă.

Уй хапхи алăкне уçсан ик ађа тухтăра курсан тарма тытăннă. Макăра-макăра тарнă.

— Матрас*) килет!.. Матрас!—тесе тарнă та.

„Матрас" ађасене тытаканни пулман. Кăшт тăрсан, „матрасăн" шлепки çеç курăнма пуçланă айлăмран. Хĕвел анса ларнă.

1928-мĕш çул.

## Пăрçа.

Пĕрре мана Салма йалне токлат тума йађĕç.
Çитрĕм йала. Халăх хăвалама хушрăм.

Халăх пухăнађђен, вăхăта ахаљ иртерес мар тесе, йалканаш преçитиумĕпе пĕђĕк канашлу пекки туса иртерес шухăшпа, çтенисене тул йенђен тĕкĕлесе хунă хурал пўртне пĕшкĕнсе кĕтĕмĕр.

Пўрђĕн ђўређисем витĕр çĕрле тăманасем кĕмелле, урай хăмине тăпраран тунă. Кăмаки пур

---

*) Матрас—тир, кушак-йытă вилли пуçтаракан çпеккуљант.

та, мăрйи çук,—хуликансем ишĕлтерсе антарнă пулмалла.

Ђалăш Куçма пек ђалăшса кайнă кутник çине ларса пĕђĕк саççетани туса илнĕ ђухне, каçан кĕçĕтме пуçларĕ. Унтан хыçап, кунтан хыçап, малтан хыçап, кайран хыçап,—тем ђухлĕ хыççан та хыçса тăранмалла мар. Манпа пĕрлех пĕр харăс йалканаш пуçлăхĕ те хыçкаланаť, писсăрĕ те хыçкаланаť. Пăрça йерсе тулнă пире. Сикекен пăрçасем.

Пăрça çыртнă пирки мĕн каласмаллине кĕскен çеç каласса илтĕмĕр те, тухрăмăр хыçкаланса халăх патне.

Ратио çинђен, хыттăн ковориттĕл çинђен, електритсăн аслатиллĕ вăй-хăвађĕ çинђен токлат тума тытăнтăм. Токлатри сăмахсем шыв пек йухаççĕ, сăмах хыççăн сăмах тухса пыраť, мĕншĕн тесен пăрçисем васкатаççĕ.

— Електритсă,—тетĕп.—Ой, вăл електритсă тенĕ пăрça йапала. Америкре електритсăпа çынсене вĕлереççĕ. Çынсене кăна мар, çын пăрçисене те пĕтерме пулаť унпала. Електритсă.—Ох вăл... тӳсмелле мар кĕçĕтет...

Пăрçасем кышланă пирки, сăмахăм та йăнăш тухса пыраť. Ђăтмалла мар вĕт.

Токлат туса пĕтермесĕрех, трипунă çинђен сиксе антăм та, çулла нăрăпа аптăранă ĕне пек йара патăм анаталла. Çăтăлти-çатăлти, çăтăлти-çатăлти... Халăх йупа пек хытса тĕлĕнсе йулђĕ. Каçан кĕçтет, ĕнсе кĕçтет, ура кĕçтет... карттус кĕçтет.. Ниçта кайса кĕмелле мар.

Ђупрăм-ђупрăм, ђупрăм-ђупрăм. Пĕр виç çухрăм ђупсан пăрçисене силлесе пăхас, терĕм. Вăрвар, тӳмесене татса, кĕпе-йĕме хывса илтĕм те,

силлесе пыратăп çил çинҫе. Ҫупсах силлетĕп. Йĕксĕк пăрçасем силлесе пăрахсан та, ман çара ўт çине каллех улăхса ларяççĕ. Кĕпе-йĕме ывăтса хăварас терĕм, кĕпе-йĕмсĕр ҫупма, хăвăр та пĕлетĕр ĕнтĕ, киҫем пек... Хĕрарăмсем курма пултараççĕ.

Силлесе те май килмерĕ. Шыв хĕрнелле çатăлтаттартăм. Шомпрр!.. сикрĕм кĕпе-йĕмпех кўлле... пăрçасене шыва путарма. Путмаççĕ, шелмăсем. Ман хыççăнах ишсе пыраççĕ.

Шывра çўресен-çўресен типпе тухса выртрăм шапа пек. Нумайах выртаймарăм. Тапратрĕç каллех кĕçĕтме. Манăн, леш, пăрçасем шывран тухнă та, шыраса тупнă каллех мана хăйаматсем. Ăшалантараççĕ анҫах.

Кĕпе-йĕме тăхăнса вĕçтере патăм малалла. Манпа пĕрле каçалла сулăннă хĕвелĕ те ҫупса пырать.

Пĕр сехет хушшинҫе 10 çухрăм ытла ҫупрăм. Сиккипе пырса кĕтĕм хулана. Курсан рыссак тейĕн. Милитсисем курҫĕç те, хăвалама тытăнҫĕç, те таркăн тенĕ. Ех, ҫупаççĕ! Еп çăтăлти-çатăлти... Ăçтан хуса çитен мана? Йероплан пек кайатăп вĕт.

Хваттере çитсе кĕтĕм те:

— Арăм, ан çыпçăн ман çумма! Кўр мана таса кĕпе-йĕм!—терĕм.

— Ухмаха йертĕни мĕн, йĕксĕк!—тет арăм аллинҫи хаҫҫине пăрахса.

— Ан калаçса тăрха кунта! Кўр кĕпе-йĕмна! Мунҫана кайатăп.

Тăнланайман пирки арăм йĕрсе йаҫĕ. Йĕрейĕрех илсе пырать ман пата таса кĕпе-йĕм.

— Ан пыр ман пата!—кăшкăрап епĕ.—Турҫă-

ка ил те, кĕпе-йĕмсене турӡăка вĕçне хурса тыттар. Ахалĕн есĕ те ман пек пулатăн, терĕм.

Тытрĕ турӡăка арăм. Йĕре-йĕрех тыттарӡĕ мана турӡăка вĕççĕн таса кĕпе-йĕм.

Автомопил пек мăшласа пырса кĕтĕм хайхискер вара епĕ хула мунӡине.

Çăвăнтăм. Хытă çăвăннипе ӳт-тирĕм çӳхелсех карĕ пулмалла.

Пĕрик сехетрен тухатăп çăвăнмалли пӳлĕмрен кĕпесем тăхăнмалли пӳлĕме те...

Кĕпесем тăхăнмалли пӳлĕмре харкашу пуçланса кайнă. Ех, харкашаççĕ. Путылккă ăшне пухса хупнă шăнасем пекех сĕрлеççĕ.

Пăрçа йерсе тулнă халăха.

Пăрçа хуçине шырама тапратнă хăшĕ-пĕрисем.

Мунӡари халăх, епĕ пăрçа йертсе килнине сисесрен хăраса, йĕмпе кĕпене тăхăнтăм та, пиншака хулпуççи çийĕн уртса йатăм та, кĕпе тӳмисене тӳлемесĕрех тухса карăм мунӡаран.

Истори кунпах пĕтмест. Киле пырсан арăм та, аӡасем те пăрçапа аптăрама пуçларĕç вĕт. Тухтăра ӡĕнтертĕм. Тухтăрĕ икĕ кун хăтланӡĕ пирĕн пăрçасене тасатса. Тасатмасан хулипех пăрçаланса каймалла. Епитеми пулаӡӡĕ. Хăрушă епитеми.

— Çапла куртăм çав пĕрре йалта,—тесе пĕтерӡĕ калаканни хăйĕн сăмахне.

Сехет шаккани илтĕнет. Пурте шухăша карĕç.

— Хăçан пулнă ку ĕç, калаха,—терĕ итлесе лараканнисенӡен çамрăкраххи.

— Пĕр пилĕк-ултă çул ĕлĕкрех.

— Халĕ те пурши вăл йалта çавăн пек йапăх хурал пӳрт?

— Халĕ-и? Хађхине мĕн калас. Халĕ тĕкĕллĕ хурал пӳрђĕ вырăнĕнђе, халăх çурђĕ йалкăшса лараҥ вăл йалта. Пуп çуртĕнђен йусаса тунă. Пит аван çурт. Ђиттађнĕ те пур çав çуртрах, стсени те пур, ратио итлеме йатарласа тунă пӳлĕм те пур. Çуртне пит таса тытаççĕ. Урайĕсене çусах тăраççĕ.

— Таса тытма кирлĕ çав халăх çурђĕсене,— терĕ тепри. —Таса тытмасан пысăк çуртра та пăрçасем, тата тĕрлĕрен ђир йертекен пактерисем нумай пулма пултараççĕ.

— Пăрça вăл тиф ђир пактерисене хăйпе пĕрле илсе пырса çынна йертме пултараҥ. Йураҥ сана пăрça пирки пĕр-пĕр ђир лекеймен...

Пурте унпа килĕшрĕç. Сехет вуннă çапрĕ. Анђах, кашни шухăша кайнă пирки, нихăшĕ те сехет са ссине илтмерĕ. Калавăм пĕтрĕ.

1927-мĕш çул.

## Ђире йертекен тилпĕрен.

Унтрийе арăмĕ сĕт йашкисем, какай йашкисем пĕçерсе параҥ кашни кунах. Çи, тăраниђђенех çи. Пит-çăмарту тăварланă хăйар пек пулса кайнă, тет вара вăл упăшки аллине сăрламан кашăк тыттарса.

Арăмĕ ăна ытлашши сăмах ђĕнмест. Ара ђĕнесђĕ те... Хăрамалла унтан—тутаран çыртса илесрен хăрамалла. Катăк тутапа пасарсене çӳреме илемлех мар, тата çилленсен тутана тăсма та ђăрмавлăрах.

Унтри çилленнĕ вăхăтра тутаран çыртса илесрен хăрамаллах пулнă çав.

Йулашки вăхăтра вăл урамра та, кил картинҙе те вара, тапак хутаççи шыранă ҙухнехи пек, пуçне усса çӳрет, тата кашни кун икшер-виçшер хут пӳрт тăррине хăпарса ҙĕлĕмне паккаса ларать. Хăй йуратнă арăмĕ те, никам та унтан: мĕн ҙĕпамăшĕ пек сарăлса ларатăн çак есĕ мăрйе кутĕнҙе,—тесе ыйтма хăраççĕ. Хăраççĕ, мĕншĕн тесен Унтри тилпĕрен çинĕ, тесе йат тухнă йала...

Çанталăк çав тери ăшă пулин те, кӳршĕсем Унтрирен сивĕннĕ. Сивĕнмеллипех сивĕннĕ. Ĕлĕк ун ури умне пырса аҙашланма йуратакан саплăк тирлĕ кушакĕ те Унтрирен пăрăнарах çӳреме пуçланă. Арăмĕ курнă тăрăх, хăнкласем те, Унтрийе курсан, мăк ăшне тарса пытанма пуçланă. Çав тери хăрамалла пулнă ĕнтĕ кашни кун пӳрт тăррине хăпарса ҙĕлĕмне паккаса ларакан, „тилпĕрен çинĕ" тесе йат тухнă Унтрирен.

Тилпĕрен хăватне сирсе йарас тесе, пĕрле çирĕм çул пурăннă арăмĕ Сителти хăрах куçлă старик патне те кайса пăхать. Кив Етемен ҙиркӳне кайса 10 пуслăх çурта лартса, турра хĕрĕх хут ӳксе пуççапса та пăхнă, анҙах... Унтри пӳрт тăррине хăпарса ларма пăрахмасть. Кашни кунах икшер-виçшер хут хăпарать. Ĕлĕкхи пекех.

Унтри пӳрт тăррине хăпарса ларни çинҙен шухăшласах арăмĕ те ҙире йерҙĕ. Выртмаллипех выртать вырăн çинҙе. Текех ĕнтĕ вăл сĕт йашкисем, какай йашкисем пĕçереймест. Унтри тип çăкăрпах пурăнать.

Мĕн калăр есĕр ăна-кăна шукăшласа илеймен пуçăрсемпе? Унтри тип çăкăрсем кышлама пуç-

ланăранпа пӳрт тăррине улăхса ларма пăрахрĕ вĕт. Тĕксĕмленнĕ куçĕсем çутăлҫĕç. Усăннă пуçĕ кăштах хăпарҫĕ. „Тилпĕрен çини“ сисĕнми пулҫĕ.

Ăна кура, шухăшпа ҫире йернĕ арăмĕ те сывалҫĕ.

Сывалнă хыççăн арăмĕ малтанхи кун пултăран йашки пĕçерме тытăнсанах, Унтри каллех мăрйе кутне хăпарса ларҫĕ.

Хуйхăрат̆ Унтрин арăмĕ. Иксĕмĕртен пĕрине вĕлересшĕнех пулмалла турă. Епĕ ҫирлесен Унтри сывалҫĕ, епĕ сывалсан Унтри ҫирлесе каллех мăрйе кутне хăпарса ларакан пулҫĕ,—тет вăл кӳршĕ арăмĕсемпе.

— Как вут хутат̆, мăрйе кутне хăпарса ларат̆. Как вут хутса кăларап, мăрйе кутĕнҫен анат̆. Кам тухатрĕши пире?—тет тата вăл хуйхăрса аптранă йенне.

— Мĕнле ҫирпе ҫирленĕ ара?—тесе ыйтасшăн пулмалла та есĕр, çакна вулакансем. Калам еппин. Акă çыру. Йулташ çырат̆ ăна:

„Пирĕн йалти Метҫакков Унтрийĕ вут хутнă ҫух, пӳрт çине хăпарса мăрйине (трупине) хурал ларат̆ вут çунса пĕтиҫҫенех. Мăрйине йусаман та, мăрйерен вут хыпса илсе пӳрҫĕ çунса кайасран хăрат̆“...

Ăнлантăра?

Арăмĕ те пĕлмен Унтри мĕншĕн çапла хăтланнине. Каламан ăна Унтри. Лешĕ (арăмĕ ĕнтĕ) каласан та ăнланас çук та, мĕншĕн тесен арăмĕ ним илтми хăлхасăрскер пулнă. Хăлхасăра каланинҫен каламанни, тенĕ.

Унтри пайан кун та мăрйе кутĕнҫе сарăлса ларат̆.

Унтри пек Унтрисем, Унтри пек Макарсем, Васлисем тата Митраппансем халĕ пулма кирлĕ мар. Пулма кирлĕ мар пулин те, пулма пултараççĕç. Çавăнпа, йалсоветсем, çуллахи вăхăтсенђе мăр йесене пăхкаласа çӳрĕр. Кам та пулин „лармасти“-ђĕлĕм паккасса Унтри пек мăрйе кутĕнђе.

1928-мĕш çул.

## Сĕлкĕш кăмăлпа.

Пайан кураксем йурлани Иван Петровиђ кăмăлне каймасť.

— Йăмра çинђен пуç-хĕрлĕ татăлса ӳкменскерсем! Мĕн илемлĕхĕ пур курак йурринђе?— тесе выртаť.

Кађаки тата... Кађака вăл илемлĕх тăшманĕ. Кĕтĕве кайасшăн... хваттер майри ăна илтмест. Харлаттарсах çывăраť, çăварне карнă пуљ, тĕссĕр! Ĕнерхи токлатра епĕ хамăн ырă шухăшсене пĕтерсе хумарăм-ши?

Тутисене, пит-çăмартисене, хăмпу вĕрнĕ ђухнехи пек, карăнтарса пф-ф-ф! сывласа йађĕ.

Хаљхи саманара етем тенĕ çынсене йурама, арăма йурассинђен те хĕнтерех. Ђăвашла токлат ту, ђăвашла, теççĕ. Ђăвашлине ђăвашла та-ха, леш, „мĕнĕ“ ђараťçке-ха...

Ав ђăхă кăтиклетет. Савăнса мар ĕнтĕ вăл кăтиклетет. Çăмарта тумалла унăн... асап кураť.

Ђанĕ çапаť. Пупĕ ирех тăнă. Ђан вăл мĕн вăл—ăна йанраса пултăр,—епĕр тĕнпе кĕрешнине сисмест вăл. Тон-тон-тон! Мĕн „тон-тон“ пур унта? Парăттăм сана „тон-тон“, хамăн ирĕк пулсан.

— Ка-ак! ка-ак! Как токлат туран?—тенёнех туйӑнать.

Ку кураксемпе!.. Ну, вырӑсла турӑм. Телекатсем килӗшмерӗҫ. Ҫӑвашла ту, теҫҫӗ. Вырӑсла лайӑхрах тухсан... кураксем те вырӑсла кӑракла-таҫҫӗ вӗт, „как“ теҫҫӗ, ҫанӗ те „тон“ тет. Тон вӑл вырӑсла пысӑк шыв йаҫӗ пулать, Атӑл майлӑскерӗн. Сехет те ав: тик-так, тик-так, ӗтӗк-так, так-та-ак! тесе вӑхӑта виҫет. Вырӑсла. Сехетӗм, савнӑ тусӑм, есӗ анҫах манӑн ӑшӑмри шухӑша пӗлетӗн!

Ҫумӗнҫе выртакан майри куҫӗсене уҫрӗ те, Иван Петровиҫ кушак пек ҫӑрлаттарса пӑхса выртнине кура, хӑй тӗлӗкӗ ҫинҫен каласа парасшӑн пулҫӗ.

— Ҫӑвашла... тӗлӗкӳ ҫинҫен токлат ту!—тесе йаҫӗ тепӗр айаккинелле выртса Иван Петровиҫ.

Аҫи, сӑпкари аҫи сассине кӑларҫӗ. Ӑммӑ! Кхек-кхек! Ма-амӑ!—тесе йӗрет.

Теп-теп-теп ҫупса карӗ сӑпка патне Иван Петровиҫ.

— Ҫӑвашла йӗр, шуйттан аҫи! Хамах хӑвнӑ, есрелӗ! Ҫӑвашла йӗме пултараймасть.

Ак, сантали тӑхӑнмалла. Ҫӑвашла мӗнле вӑл сантали, ҫавна кала есӗ, Иван Петровиҫ, ӑ-ӑх, мӑн сӑмса!—терӗ те ҫывӑрнӑ майӗпе кӳпшекленсе кайнӑ пӳрнисенҫен ҫӑмӑр туса, ҫӑмӑрне хӑйӗн ыйхӑран вӑранайман сӑмси патне илсе пыҫӗ.

*

* *

Кураксем ҫапах каклатаҫҫӗ. Ӳпресем нӑйлаҫҫӗ, сӑмси-ҫине вӑтанмасӑр улӑхса лараҫҫӗ, ҫапсан вилеҫҫӗ.

Пасарпа иртсе кайнă ђухне, Иван Петровиђ ђăвашсем çинелле куç айĕн пăхса пыраť. Анђах ђăвашсем пăхмаççĕ.

— Кăсем те токлата епĕ тăнланмалла мар тунине пĕлеççĕ пулмалла. Çилленнĕ. Çăкăр-тăвар хирĕ-хирĕç, теççĕ пуђ.

Майра хĕр пыраť малта: ђеђек, ђеђек темелле! Иван Петровиђ çине йăпшăнсах пăхаť тата.

Хĕрĕн урисене пăхса пырса уђрештенирен ђуť иртсе кайман Иван Петровиђ. Токлат хыçала йулнă, пасарах.

Уђрештенийе кĕрсенех йулташĕсем:

— Аван турăн токлат, аван,—теççĕ.—Мĕнле шухăшласа кăларма пĕлнĕ ара есĕ вăл токлатри ăслă шухăшсене,—теççĕ.

Ђăваш ĕççыннисем токлата ăнланайманни çинђен йулташĕсем аса илтермерĕç.

Машшинисткă шалтăртатаť, телефон ђăнкăртатаť, руђкăсем ђĕриклетеççĕ. Йуратнă хутсем çине Иван Петровиђ виçшер сăмах çыраť те, йытă хӳри туса хураť.

Ĕç кунĕ хăй тивĕçлĕхне йышăнђĕ. Ирхи шухăшсем сӳнсе ларђĕç, хут çинђи шухăшсем сарăлса илђĕç.

Ырă кунçул пултăр çав лапђăк сăмсаллă Иван Петровиђа! Ђăваш ĕççыннисене ăнланмалла токлат туса пама кирли çинђен аса илтерсе, унăн ырă кăмăлне сĕлкĕшлентерсе йарар мар.

1927-мĕш çул.

## Хӑнӡапа хӑҫан.

Ҫӑлкуҫӗ пек тӑп тӑрӑ кӑвак пӗлӗтлӗ кун, мӑн ҫул ҫинӡи лӗпсӗркке хурӑн сулхӑнӗнӡе ҫула тухнӑ хӗрарӑм ларать... пӗӡӡенех. Унӑн питкуҫӗ ҫине „кайас ҫула хӑҫан ҫитемши“ тенӗ шухӑш ӗмӗлки ӳкнӗ.

Кунтисем мар, инҫетрийех пулмалла вӑл. Кӑтра хурӑн тураттисемпе ҫӳлҫисем хушшипе ӳкекен хӗвел пӗрӡисем пӗре хӗрарӑм хушпувӗн шултӑра кӗмӗлӗсем ҫинӡе вӗлтӗртетсе тӑраҫҫӗ, тепре—сӑркасем, ҫеҫтенкӗсем, теветсем ҫийӗн вӑй выӡанӑ пек иртсе кайса, каллех ҫухалаҫҫӗ, пӗтеҫҫӗ.

Ларсан, ларсан тепӗр хӗрарӑм пырса ҫитрӗ ҫулпала хайхи арӑм ларнӑ сулхӑнлӑ хурӑн айнелле. Вӑл пиӡӗ ҫинӡи тарне шӑлса йаӡӗ те, сулахай аллинӡи тӗркине ҫӗре хуӡӗ васкамасӑр.

— Ман та ларса канас-ха,—терӗ вӑл лешӗн ҫумне ларса пӑхса.

Тумтирӗсенӡен пӑхсан хаӡ килнӗ арӑм Шупашкар районӗнӡи хӗрарӑм пулни каламасӑрах паллӑ. Катам пиртен тунӑ шупӑрӗ те, хура тӑлапа пӗрене пысӑкӗш ӡӗркесе сырнӑ ури те, шерепетлӗ сарлака пиҫихипе пӗрмелетнӗ анлӑ шур ҫип кӗпийӗ те вӑл ӑҫти ҫыннине лайӑх пӗлтерсе тӑраҫҫӗ. Иккӗшӗ малтанах пӗрин ҫине пӗри сӑнамалла пӑхса илнӗ хыҫҫӑн, халиӡӡен пӗрпӗрне курманскерсем, каласма тытӑнаҫҫӗ.

— Кӑҫта тата?—тет пуҫне хӑпартса пирвайхи арӑм хӑйӗн анатри ӡӗлхипе.

— Кӗҫтемеҫ-ха нимӗн те,—тет тӑнланмасӑр вирйал матки.--Кӗҫтесен те пор кӗҫтенӗ вурӑна ҫтан хыҫса ҫитерӗн. Ӗҫӗ пирӗн нумай та, копарӡана хыҫса илме те вӗрем ҫок. Она ту, кона ту, ӗҫлесех кон тохать вара кон тӑршшинӡе.

— Она ту?! Она йатлă ту пури ваҁа? Курасҙĕ ăна. Пысăк туах пулĕха вăл.

Вирйал матки кун çине кăн пăхса илҙĕ,—ухмаха йернĕскер марши ку?—терĕ пулмалла. Çапах хирĕç сăмах каламасăр йулас мар—терĕ.

— Мĕн тунине корасшăнха апла есĕ? Пĕлимарăм. Ҙăпта çапнине-и? Апла корасах килет полсан кайса корăпăр. Йалĕ пирĕн контан ытлашши инҙех мар. Ав лере йăвăçсам корăнаççĕ. Çав вăл пирĕн йал.

— Пыраймастăп пулĕ. Инçе çула çӳресе урам ахаљ те ҙатанланса карĕ.

— Çатанланса?

— Ҙатан урампа вăлту çине улăхайасси пулмĕ çав... Улăхасси...

— Олăхĕ тени пирĕн вара пит те сахал. Вутă кирлĕ таран тăвимастпăр. Çаранĕсем те хытса ларнă та...

— Ай-уй! Ан тĕлĕнтерех, кин! Вутта вăрманта тăваççĕ, улăкра мар...

— Вăрманти вотă вăл. Ăна выљăхсам çимаççĕ.

— Тфу! Тинке тухаť есĕ калаçнипе. Йури мăшкăласа калаçатăн пулмалла. Тинкене илтĕн!

— Мĕн тăвап епĕ санăн тенкӳпа!

— Мĕн!

— Хамăнах тенкĕсем пор тетĕп. Çынăн кирлĕ мар. Хаљ анҙах...

— Анҙах? Мĕн вăл—„анҙах“.

— Анҙах-и! Çавна те пĕлмесни? Ăçти çăва тĕпĕнҙи çын пулатăн ес?

— Çăва тухасси тухрăмăр та, иçмасса... каçана йăвăр килет пуљха. Лаши çамрăк та, калама çук харсăр. Харсăр лашапа ĕç тума пит те хĕн.

— Харсăрри *) пырĕха вăл. Вара есĕ ху соха тăватни? Опăшку çоки мĕн?

— Упăшкам вилнĕ çав. Кађђа тухас терĕм. Йĕкĕтсем çук, йурăхлисем. Пулсан та тете йевĕрлисем.

— Тетеле йернĕ? Мĕн йернĕ? Хăш шуа лартнăђђĕ? Полă йернĕ полсан пĕçерсе çима пит лайăх ĕнтĕ. Нумайрах йернĕ полсан, килйышсене вађă **) полаť.

— Вађă. Майра хĕрĕ-и?

— Майра хĕрне те çитарма пулаť. Кашăк туллийех ăсса çийĕ ăшшă.

— Мĕн вăл „кашăк“?

— Апата ăсса çимелли.

— Мĕнле йапала вăл? Епир йашкана çăпалапа çийетпĕр.

— А епĕр çăпалапа йашка анђах антаратпăр.

— Ťфу! Тĕлĕнмелле сирген,—тет анатри турине хирĕç.

— Серте те йаратпăр. Хăш ђохне полтран йарсан та лайăх апаг полаť. Олма йаран... Кмоко хутан... Шуне йаран... Ашне йаран...

— Ашшĕне, шыв ăсма йаратни? Пирĕн атте пасара какай илме кăна кайаť. Шывне хамах кӳретĕп. Какайĕ кăђухне хакланса карĕçке.

— Мĕнле хăйаматла йапала вăл какай? Хаклăскери?

— 1 тенкĕ те 20 пуса пур. Хаклă.

— Хаклă тенĕрен, кăçал аш хăпарса кайрĕ. Тенкĕ те сом та пилĕк пус та вон тăвата пус. Хăнђа пулнă он пек хак!..

---

*) Харсăр—ĕçђен. Хăшпĕр çĕрти ђăвашсем «харсăр» тесе—хушнине итлемен çынна (йе выђăха) калаççĕ.

**) Вађă—пайланă татăк.

Каласрĕс, каласрĕс, пĕрпĕрне нийепле те ăнланаймарĕс. Тăлмаҕă кирлĕ вĕсене пĕрпĕрин сăмахне ăнланма!

*
* *

Тăварлă симе йуратаканскер, кунта епĕ, йулташсем, сырасса та тăварлăрах туса сыртăм пулмалла. Вăл йурĕха. Йулашкинҕен манăн сакна каламалла:

„Хăнҕа" ҕăвашсемпе „тете" ҕăвашсене, „вотăпа" „вутта", „ăстапа" „кăстана" пĕрле сыхакан авалтанпах кĕтнĕ тăлмаҕ—ҕăваш ĕссыннисен, пролеттари сунталĕ синҕе йакалса, туптанса, вăйланса пыракан сырулла литтераттура ҕĕлхийĕ пулса тăрат. Вăл ҕĕлхене ăнланман ҕăваш сук.

1926-мĕш сул.

## Лăпкă ҕĕре те хайарланат.

Инкек пырса сакланнă Макар Мирунҕҕа. Пысăк мар та инкекĕ. Ҕут вилсе кайман пĕре вăл. Сывлăшĕ тухсах тарнă пулнă, анҕах инсех кайайман. Тарайман. Мĕншĕн тесен Макар Мирунҕҕă вилме йуратакан сын мар. Мĕн тăват ара вăл вилсе? Пурнăсĕ унăн ҕухăнах мар. Вăтам сын темелле ăна.

А инкекĕ, тĕрĕссипе каласан, ҕĕлĕм туртмалли йапаларан тухса кайнă. Пăш-пăш-пăш туса сăвартан кăларса йамаллинҕен.

Иртнĕ уйăхра, кунне астумастăп, Макар Мирунҕҕă вуламалли сурта пынă. Ҕĕлĕм туртмашкăн хасат саклатса тухас шухăшпа пынă.

Хытă сынске пирĕн Макар Мирунҕҕă. Ҕĕлĕм савăрма хут илме те укса хĕрхенет.

Çапла, пырса ларнă та пĕрре вăл вуламалли çурта, вуламасăрах пĕр хаçатне персе ђикнĕ... хĕвне, çын курађђен. Персе ђиксен, ђĕлĕм çавăрмалли тупрăм ĕнтĕ тесе, савăннă та-и тен. Савăнассине савăннах ĕнтĕ. Савăннă пирки пуђ, ђĕлĕм çавăрма хаçатне çĕтнĕ ђухне, темиçе сăмахне вуламах тытăннă. Ăçта каймасѓ вăхăт, кăшт вуласа пăхамха, тенĕ пулмалла.

Сайом çинђен çырнă пулнă унта. Сайом опликатсисене сутма йураманни çинђен. Вуласа пынă çĕртрех çапла вăл Мăнтăр Михалккапа тĕлме тĕл пулнă. Ђуѓ сăмсисемпе пырса çапăнман иккĕшĕ.

— Мĕн вулан?—тенĕ, конешнă, Михалкка. Лешĕ, Макар Мирунђђă, тĕрĕссипе каланă. Суйман.

— Ехе!—тенĕ Михалкка, кулак, Макар Мирунђђăна хирĕç. Çапла „ехе!“ тенĕ йатсăр пӳрнипе çӳлелле çĕклесе.—Ехе! Опликатсисене сутма каламаççĕ? Сутма каламаççĕ пулсан, сутас пулаѓ. Мĕне те пулсан пĕлтеретех çапла калани. Мĕне пĕлтересси паллă, пăрахăçа тухмалла вĕсем. Пур опликатсисем те пăрахăçа тухмалла,—тенĕ.

Макар Мирунђђă кăна илтсессĕн, шап-шурă шуралса кайнă. Аллинђи хаçат тĕслех пулнă. Ара унăн вĕт 10 тенкĕллĕх опликатси пулнă. Вунă тенкĕ—укçа вăл, „ђервонтсă“ теççĕ ăна. Пăрахăçа тухсан —шел.

Сутмалли йапалана пасара кайса сутаççĕ. Ку опликатси, ĕнтĕ, пасара кайса сутмалли йапала мар. Пахарах йапала. Хулана кайаѓ ăна сутма. Панкка. Вунă тенкĕ укçа шăнкăрт илсе килет. Тĕпсакайне, пĕђĕк арђа ăшне, ађашласа ђĕркесе хураѓ ăна (укçине, конешнă). Çапла, пĕђĕк арђа

пулнă унăн. Питĕрĕнекенскер. Хунине никам та курман. Çăлтăрсем те çук та унта тĕп сакайĕнҗе. Уйăхĕ те çук та. Вĕсем те курайман. Шăшисем курнă пулсан та, вĕсем нимĕн те марçке... Пĕлмеççĕ, сисмеççĕ вĕсем. Çапла опликатси сутнă укçа тĕп сакайĕнҗе. Канлĕ выртать. Хăрамалли çук. Лăпкă вырăн.

*
* *

— Ай, тур-тур! Вилет Макар Мирунҗҗă! Вилет вилет, тесе җупаççĕ пĕре çынсем.

Кĕрхи хĕвел хăйусăр пăхать. Ерешмен картисем йавăнса çӳреççĕ. А Макар Мирунҗҗă вилме выртнă. Лаша урапиcем җупмалли çул çине. Унта выртма лайăх маррине те пăхман. Манса кайнă пулмалла лайăх марри çинҗен. Васканă ĕнтĕ. Çапла выртнă та вилнĕ.

Вулав çурҗĕн пуçлăхĕпе калаçнă хыççăн вилнĕ. Ара укçа тухнă пулнă çав пĕркун сутнă опликатси çине. Çав телейсĕр опликатси çинех тухнă пулнă. Тухнине вулав çурҗĕ пуçлăхĕ Макар Мирунҗҗи сутас умĕн çырса йулнă номĕрĕ тăрăх тупса панă. Пĕр пус мар, вунă пус та мар, пин тенкĕ (тытса курни есĕр ун пек укçа!)... Шăп пин тенкĕ тухнă вĕт опликатси çине.

Кăна пĕлсен. Макар Мирунҗҗăн җĕри, ĕлĕк лăпкă пулнăскерех, калама çук хайарланса кайнă. Нийепле те тӳсеймен,—хайар çын кĕпине çурса пăрахнă пек, çав җĕре те хăйĕн җĕре хутаççине çурса пăрахнă. Вара Макар Мирунҗҗăн сывлăшĕ („җунĕ“ пекки ĕнтĕ) хутаçран тухса тарма тытăннă.

Епĕр тăрăшнипе тарнă çĕртенех кайалла кӳртрĕмĕр вара җунĕ пеккине (Макар Мирунҗҗă җĕри

ăшне). Витрепе шыв сапрăмăр Макар Мирунђђă çине. Пĕрре сапрăмăр, виççĕ сапрăмăр. Виççĕ сапсан ђĕрĕлђĕ вара. Витре пулман пулсан, сывлăшĕ тата инçе кайса çухалнă пулĕђђĕ. Пĕтеђђĕ вара пирĕн йалта Макар Мирунђђă йатлă çын.

Ара, ђĕре пулати вăл! Хĕвел пăхаť, ерешмен картисем пите çапăнаççĕ, çулçăсем вĕл-вĕл вĕçсе анаççĕ йăвăç çинђен, çав вăхăтра, çут çанталăк илемне пĕлмен ђĕре, çурăлса кайас шухăш тытаť. Мĕн тăван ĕнтĕ унпа?

Ун пек ђĕрепе пурăнма йăвăртарах çав кăђуххехи тĕлĕнмели ĕçсем пулакан саманара, краштăнсем! Опликатсисене тем пек сутас килсен те, сутмасăр тăмалла ун пек ђĕрепе. Нта! Укçа тухсан, пĕтес пулатиç!

1929-мĕш çул.

## Сысна ваљљи мехханисатси.

Аран-аран кукăрткаласа, ликпункгра вĕренекен çынла çырнă хут.

Канверђĕ çине: «Ку çырува ман йыснана—шĕвĕр сăмсаллă сыснана памалла» тесе, сысна сăмсипе пиђет пуснă.

Халĕ канвергне хăйпăтса, ăшĕнђи хутне вуласа парар.

* * *

*Йыснаçăм сысна!*

Сана пĕтĕм хырăмран, ђунтан, пыршăран, пĕтĕм ÿпке-пĕвертен салам йаратăп. Курăнса каласманни пит нумай пулаťçкеха пирĕн иксĕмĕрĕн. Мĕнле пурăнатăнха, тусăм? Нăриклатса çÿретĕни,

йе нăрăхлатса выртса вăхăта ирттеретĕн, йе вилсе пасарсенҫе ҫастнăй хакпа сутăнакан усал супăҫ-сем тунă ҫĕре карĕ санăн ҫĕрми ӳтӳ?

Епĕ халĕ нăрăх-нăрăх тесе савăнса ҫеҫ пурă-натăп. Санпа нăриклатса ҫухăрса уйăрăлнă хыҫҫăн, мана вакун ҫине, пĕрремĕш сыснасен класне лартса, пит инҫете илсе карĕҫ. Вакунĕ епĕ ҫывăр-нă вăхăтра та кайаť, ура ҫинҫе тăнă вăхăтра та кайаť. Ҫĕрле те кайрăмăр, сысна кăнтăрлинҫе те кайрăмăр. Вă-ă-ăрăм, пит нумай кайсассăн, мана ҫвиноволтрест совхосне йарса хăварҫĕҫ. Халĕ те унтах пурăнатăпха.

Ну вара, кунти пурăнăҫ ҫинҫен каласассăн, санăн туту ҫинҫи 5 пуслăх пăхăр укҫу тăрăх сĕ-лехӳ йухса анĕ.

Пирĕн совхос кĕтӳвĕнҫи сыснасен хисепĕ пуҫ-ран шутласассăн 20 пин пуҫ, урaран шутласассăн 80 пин ура пулаť.

Совхосне Ҫвиноволтрест тытса тăраť.

Есĕ темĕскерле ан шухăшла: Ҫвиноволтрестра сыснасем мар, етемсемех лараҫҫĕ. Вĕсем пире ҫĕ-лĕм ҫăпăкĕнҫен те ытларах йуратаҫҫĕ. Ҫавăнпа пур сыснасене те пĕр пекех пит лайăх пăхаҫҫĕ. Пире пăхнă ҫухне совхосри рапоҫҫисем утарнĕк-ле ĕҫлеҫҫĕ... сысналла мар. Кахалли тупăнсассăн, ăна хура хăма ҫине ҫакса хураҫҫĕ... Вăл марха, урăххи ҫинҫен, хамăр совхосри машшинсем ҫин-ҫен пĕлтересшĕн-ха сана ку ҫырура.

Пĕл ĕнтĕ; калам: пире машшинпа ҫитереҫҫĕ, машшинпах самăртаҫҫĕ, машшинпах... пусаҫҫĕ. Пуснă тени лайăх йапалах мар пек те, анҫах ун пек лайăх хăнари пек пăхса усрана хыҫҫăн, пуссас-сăн та кӳренместпĕр.

Ах, курасҫӗ санӑн пирӗн совхосри машшинсене!

Сухаласа акакан машшинсем ҫинҫен каламӑп. Курнӑ пуҫ есӗ те ун пеккисене. Ҫавӑнпа вӗсем ҫинҫен каласа халӗ сысна кӑнтӑрлине иртермӗпӗр. Ҫум ҫумлакан машшина курсан вара, 4 уруна ҫӳлелле тӑратса шанках хытса кайӑн. Етем пек таптаса ҫумлаӗ (Шупашкарти слушӑшҫисем Корпо совхосӗн паранкӑ анисене ҫумланӑ пек мар). Уҫрештенийе тасатакан комиҫҫи пекех, ҫум куракӑксене пӗтӗмпех татса, тураса тирпейлесе пыраӗ. Ну, мӗн калӑн ӗнтӗ—нӑрӑх тейӗни, нӑрик тейӗни кӑна илтсен.

Пулса ҫитсен паранкине тепӗр йышши машшин кӑлараӗ. Хӑвах куратӑн ӗнтӗ—паранкӑ кӑларма ни кӗреҫе, ни сӑмса кирлӗ мар. Пӗрер штукӑн кӑна мар, икшер касӑн пӗр харӑс кӑларса пыраӗ. Кӑлараӗ те паранкине ҫавӑнтах мешуксем (михӗсем) ӑшне тултарса хӑвараӗ. Мишукӗсем ҫынна курсан, пирӗн пек, нӑрӑх тесе иртсе кайакан автопуссем ҫине тийенсе склата кайаҫҫӗ.

Кашни склатран кухҫӑна (пирӗн кухҫӑна) ҫукун ҫул пыраӗ. Ҫукун ҫулӗсем тӑрӑх, мана ваҫҫи кухҫӑра пӗҫермелли протуктӑсем тийенӗ вакунеткӑсем ҫупаҫҫӗ...

Елеваттӑр... елеваттӑр тенине каллех ӑнланаймастӑн пулӗха есӗ кӗнекесем вуламан сысна пуҫупа. Ӑнланаймастӑн пулсассӑн ман пата сайавлени ҫырса йар, вара сайавленийӗ ҫине ресоҫутси хурса ӑнлантарса парӑп. Ҫапла... ҫав елеваттӑр нӳхрепрен паранка хӑйех пухса кӑлараӗ те, компайӑн ӑшне йарса параӗ. Компайӑнӗ хӑй ӑшӗнҫи паранка, ним ӳркенмесӗр-тӑмасӑр, хӑйех ҫуса тасатаӗ,

хӑйех пĕçерет, хӑйех тĕвсе çемçе апат туса парать.

Санӑн та çийес килĕҫҫĕ те ун пек машшинпа çунӑ, машшинпа пĕçернĕ, машшинпа тĕвнĕ паранка, анҫах пирĕн совхоса сан пек шĕвĕр сӑмсасене илмеççĕçке. Сӑмсуна хӑйраса мукат та, кĕлеткуна ман пек пулма вĕрсе хӑпартса сывлӑшпа тултар,—вара „ку та ӑратлӑ" тесе илĕçи тен сана та совхоса.

Аннӳна вӑрçмалла санӑн хӑвна пĕҫĕккĕ тунӑшӑн. Ма вӑл ӑратлӑ сыснапа ҫупас вырӑнне, ҫӑваш ӑратти сыснипе ҫупса, сана пĕҫĕккĕ туса йанӑ. Сан вырӑнта пулсассӑн, епĕ ӑна çуралнӑ кунах Аслӑ сута парса айӑпламалла, сашҫитнĕксем пулма соотехнĕк-акрономсене тытмалла.

Вӑл ку пулĕха, малалла кайӑпӑр. Тата мана ваҫҫи йатарласах „самоппойлккӑ" текен машшин туса паҫĕç. Пыр йарӑнма пуçласассӑн, çав машшин патне пыратӑп та, вӑл мана курсан хавасланнипе хӑйех уçӑлать те, кирлĕ таранах тутлӑ шыв ĕçтерсе йарать. Ӑшĕнҫи шывĕ сивĕ çанталӑкра та шӑнмасть. Ун ӑшĕнҫе икĕ ламппӑ пур, çавсем шыва шӑнма памаççĕ.

Мана ҫӑпӑл тумалли машшин та пур. Лапрашĕнҫе хама-хам ҫӑпӑл тунӑ ҫухнехинҫен те лайӑхрах ҫӑпӑл туса йарать. Ай, çурӑм кĕçтесе (кĕçĕтсе) карĕ! Çак çырува васкаса çырмалла мар пулсассӑн, кайса хыçкаланатӑпҫĕ те... пĕлессӳ килет пулсассӑн, хыçкаланмаллине те пирĕн мехханисатсиленĕ (машшинлатнӑ). Пыратӑн та тимĕр тӑмӑртан тунӑ тунката кутне, тункатийĕ хӑйех сана йут сысна шӑртĕнҫен тунӑ шҫутккӑпа кирлĕ çĕртен хыçса йарать, пит лайӑх хыçать. Сана пĕрре

хыçса йарасҫĕ те унпа. Хыçкаланасшăнах пĕрре хăнана ҫĕнмелле те сана, анҫах çулĕ инçе те, килеймĕн çав. Килсессĕн машшинĕ песплатнах хыçса йараҫҫĕ те...

Тата санăн манăн тислĕке курса кайасҫĕ. Тĕлĕнсе хытсах кайăн: ăна та машшинпах тасатаççĕ. Ара, мĕн каласси пур, епĕр 30 пин сысна, тутлă апат çинĕ хыççăн, мĕн ҫухлĕ тислĕк туса купалатпăр пулĕ те, ăçтан вара ăна машшинсăр тасатса пырайрăн. Машшинĕ пирĕн тислĕке ăсса кăларса вакунеткă çине ўпĕнтерет те, йатарлатса тунă пĕҫĕк ҫукун çулпа тислĕк усрамалли вырăна илсе кайаť. Çав тери хытă ĕçлет, епĕр 20 пин сысна темҫул мекĕрленсен те, ăна ваљљи тислĕк пама ĕлкĕрейместпĕр.

Çулла кĕтўве тухсан тислĕксене уйах хăваратпăр. Кĕтўве, ура айĕнҫи симĕс апата çиме епĕр мĕнле тухнине курсан, кулсах вилĕн, вар-хырăму хытсах ларĕ. Кĕтўве нихăçан та çуран тухман, лашапа та мар, крусовик автомопил çине лартса илсе кайаççĕ, çуран çўресе ўтпў çăмăлланса кайасран хăратпăр. Хăпарса (улăхса) ларатпăр та ĕлĕкхи Микулай патшан улпуҫĕсем пек мăнкăмăллăн тутасене тăсса автомопил çине, шофĕре нăрăх-нăрăх тесе çеç приккассем парса пыратпăр.

Çапла, пурнăç пыл та çу темелле. Пур çĕрте те мехханисатси, кирек ăçта та машшин!..

Мĕнле йышши апатсем çитерни çинҫен тепĕр ҫухне çырса тĕлĕнтерĕпха. Халĕ кун ҫухлĕ çырнипе çитĕ—ура ывăнҫĕ (çырса).

Ку çыру çумне виçĕ фоттокарттăҫкă ҫиксе йаратăп—ан çухат. Хăвăн сысна витўне çапса йар. Малти кĕтесе. Ťфу! Маннă кайнă—сана ваљ-

ђи хӳçу, вите туса пама шухӑшламан та пулĕха...

Картӑђкине Кимккин фоттокрӑф патĕнђе ӳкерттертĕм. Кашнишĕн полтинĕкшер вак укçа тӳлерĕм.

Вӑл паха картӑђкӑсене, ху курса тӑраннӑ хыççӑн, хуçуна та кӑтартма пултаратӑн. Çак çырува та вулаттар ӑна. Вӑл та пĕлтĕр мĕнле епĕр пурӑннине. Пирĕн совхос йевĕрлĕ сысна ĕрђетекен колхос орканисатсилеме шухӑшлаймĕши вӑл?

Ну, ĕнтĕ халĕ сыв пулса йулха! Йӑвӑр пурнӑçа тӳсейменнине ху вилнĕ пулсан та, вилмен пулсан та, ответне çийĕнђех çырса йар.

Çвинотрест совхос сысни **Хавронийĕ Петровнӑ.**

Хакĕ 40 пус
Цена 40 коп.

ИВАН МУЧИ РАССКАЗЫ

# КРАСНЫЙ СМЕХ

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО 1931